Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АПРЕЛ 26 ЫТЛАРИКУН 95 (4908)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш ҫул тухат ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕҫтăвкомăн хаҫачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Кĕмурлăйăн 6—23

Чебокс. Ц. Б. им.

Сталинла Конституци—Октяберти Социалисăмла Аслă Революцин кĕрешӳпе ҫĕнтерӳсен итогĕ. Сывă пултăр ҫĕнтерне социалисăмăн тата чăн-чăн демократисăмăн Конституцийĕ!

(ПСК(б)П Тĕпкомĕ 1938 ҫулхи Майăн 1-мĕшне иртерме панă лозунгсенчен)

Суйлав кампанийĕ пуҫланчĕ

Пайан, апрелĕн 26-мĕшĕнче, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанийĕ пуҫланчĕ. Ийунĕн 26-мĕшĕнче епĕр Российйа Федерацийĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлатпăр. Пирĕн ҫĕршыври халăхсен, ҫав шутрах чăваш халăхĕн пурнăҫĕнче те пит те пысăк пулса иртен Сталинла Конституцийе ҫирĕплетсе хăварнă союзла тата автономлă республикăсен влаҫĕсен верховнăй органĕсене суйлас права пурнăҫа кĕрет.

РСФСР тата Чăваш АССР Тĕпĕҫтăвкомĕсем ийунĕн 26-мĕшĕнче суйлав кунĕ тăвасси ҫинчен йышăннă постановленисене Чăваш республикинчи ĕҫҫыннисем пит те пысăк савăнăҫпа, хаваслăхпа кĕтсе илчĕҫ. Ĕҫҫыннисем партин Сталинла Тĕп Комитетне, Совет правительствине, Сталин йулташа РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн историлле суйлавĕнчи пекех тата лайăхрах, тата организациллĕрех иртерме пулса сăмах параҫҫĕ.

Ошосстройри рабочисемпе служащисем йышăннă резолуцийе акă мĕн ҫырнă:

„Халăх тăшманĕсене, тăван ҫĕршыва сутакансене—троцкисла-бухаринла бандăсене ҫапса аркатнă. Анчах, тăшмансем халĕ те хăйсен киревсĕр ĕҫĕсене тума пăрахман. Революцийĕ сыхлăхне тата палăртар, тăшмансене тымарĕпех тăпăлтарса пĕтерер".

Шăхасан районĕнчи Молатăв йачĕпе тăракан тата „Свет" колхозĕнче пулса иртнĕ митингсенче колхозниксем суйлав кампанине хирĕҫ ĕҫне лайăх ĕҫлесе „пăлă" туса иртерме пулаҫҫĕ.

„Епĕр хамăр республикăн Верховнăй Совечĕ чи лайăх, ĕҫре тĕрĕсленнĕ, Ленин—Сталин парти ĕҫĕшĕн чĕререн парăнса ĕҫлекен йулташсене суйлатпăр, коммунистсемпе партире тăманнисен блокне ҫирĕплететпĕр",—акă мĕн калаҫҫĕ Шупашкарти спирт савăчĕн рабочисемпе служащисен митингĕнче йышăннă резолюцире.

Суйлав кампани пуҫланчĕ. Ҫитес кĕске вăхăтрах РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидатсем тăратасси пуҫланат. Аслă ҫĕршывăн совет халăхĕ ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлавĕн паха опытне шута илет. Вăл РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене хăйĕн чи лайăх, чи шанчăклă, ĕҫре тĕрĕсленнĕ партири тата партире тăман большевиксене суйлат.

ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлавĕнче совет халăхĕ хăйĕн организациллĕхне, производствăлла тата политикăлла активлăхне йар уҫҫăн кăтартса пачĕ. Анчах пирĕн иртнĕ суйлавра тунă ҫитĕнӳсене кăна пăхса ларма мар. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлавĕнчен те лайăхрах, тата организациллĕрех иртерме пĕтĕм вăйа хумала. Суйлавҫăсем хушшинче ĕҫлессине хулара та, йалта та анлăн сарса йамала. Пропагандиссен, агитатăрсен, политвулавҫăсен нумай пинлĕ ҫарне халăха суйлав Положенисене, РСФСР тата ЧАССР Конституцийĕсене тĕплĕн ăнлантарса парас ĕҫе хутшăнтармала. Кашни суйлавҫă РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанийĕпе сыхăнса тăракан ыйтусене пурне те тĕплĕн пĕлсе тăтăр. Большевикла агитаци суйлавҫăсен политикăлла, производствăлла активлăхне ҫĕклет. Парти, комсомол, профсойузсем тата совет организацийĕсен задачи — большевикла агитаци ĕҫне анлăн сарасси, ку ĕҫе тума пĕтĕм актива хутшăнтарасси пулат. Суйлав кампани пирĕн общественнăй организацисене халăхпа тачă сыхăнма, хăйсен хушшинче чи талантлă, пултаруллă организатăрсемпе агитатăрсене палăртма май парат.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлавне хутшăнни пур уйăрăмлăха манмала мар. Ку суйлавсенче суйлав округĕсем нумай. Пирĕн республикăра РСФСР Верховнăй Совет депутатне суйламалли 7 округ, Чăваш АССР Верховнăй Совечне суйламалли 96 округ. Суйлав округĕсен центрĕсем нумайăшĕ йалсовет центрĕсенче пулаҫҫĕ. Пирĕн организацийо-массăлă ĕҫре ҫакна шута илмеле. Суйлав округĕсен центрĕсем йалсоветсенче нумай пулни партин вырăнти организацийĕсен ответлăхне ӳстерет.

Общественнăй организацисем округри, участокри суйлав комиссийĕсен составне хăйсен представителĕсене кĕртеҫҫĕ. Кунта революцийĕ сыхă пулни, суйлав комиссийĕсене ĕҫре тĕрĕсленнĕ, халăх умĕнче авторитетлă йулташсене суйласси тĕп вырăнта тăрат. Сыхă тăни — округри тата участоксенчи суйлав комиссийĕсене тăшмансем, вĕсене пулăшакансем тата шанчăксăр ҫынсем кĕрсе кайассине картлат. Суйлав комиссийĕсенче партири тата партире тăман большевиксем лайăх ĕҫлени суйлав кампанине анăҫлă иртермелли условийĕнчен пĕри пулат.

Коммунистла парти, халăхсен аслă ҫулпуҫĕ Сталин йулташ йертсе пынипе пирĕн Чăваш республикинче социализм строительствин пур участкинче те пит те пысăк ҫитĕнӳсем тунă. Пирĕн суйлавҫăсем ҫак чаплă ҫитĕнӳсем ҫинчен, епĕр вĕсене Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе тунă ҫинчен, аслă вырăс халăхĕ чăваш халăхне пусмăртан тухма, тулли правă, телейлĕ те савăнăҫлă пурнăҫ пани ҫинчен калаҫса памала.

Парти суйлав кампанине коммунистсемпе партире тăманнисен блокне, союзне туса тухма чĕнет. РСФСР тата ЧАССР парти организацийĕсем, коммунистсен массăпа тачă сыхăну тытмала. Коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокне ҫирĕплетсе, суйлав кампанине большевикла организациллĕн иртерсе, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне социализм строительствин пур участкинче те ҫĕнĕ ҫитĕнӳсем тунипе кĕтсе илер.

Суйлав кампанине большевикла сарса пырар!

Рабочисемпе хресченсем! Суйлав кампанине сарăр! РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсенче коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ сывă пултăр!

Грузин тата Армйан СС Республикĕсенчи суйлав умĕнхи пухусем

Пирĕн аслă ҫĕршывăн халăхĕсем пурте союзлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене пысăк хаваслăхпа хатĕрленеҫҫĕ.

Грузинпа Армйан СС Республикĕсенче суйлав умĕнхи пухусем пулса иртеҫҫĕ. Суйлавҫăсем республикăсен Верховнăй Совечĕсен депутатне суйлама хăйсен кандидачĕсене тăратаҫҫĕ.

Батумри „Главнефть" базинче 400 суйлавҫă ытла пуханнă. Чи малтан стахановец-слесарь Мельничук йулташ тухса каласнă.

36 ҫул кайала,—тенĕ вăл,—аслă Сталин Батуми рабочийĕсен революциллĕ кĕрешĕвне хăй йертсе пынă. Вăл пирĕн патра патша самодержавине хирĕҫ, Грузири ĕҫҫыннисене пусмăрта тытса усракансене хирĕҫ революциллĕ кĕрешӳ йалавне чи пирвай ҫĕкленĕ. Вăл ăслăн йертсе пынипе епĕр савăнăҫлă пурнăҫ ҫĕнтерсе илтĕмĕр. Акă мĕншĕн ĕнтĕ епĕр Грузин ССРеспубликĕн тата Аджари АСС Республикĕн Верховнăй Совечĕсен депутатне суйлама пĕрремĕш кандидата социалисăмла ҫĕнтерӳсен организатăрне, халăхсен аслă ҫулпуҫне Иосиф Виссарионович Сталина тăрататпăр.

Ҫак сĕнĕве 400 ҫын пурте тăвăллăн ала ҫупса йышăннă.

„Главнефть" базинчи суйлавҫăсем Грузин СС Республикĕпе Аджар АСС Республикĕн Верховнăй Совечĕсен депутатне суйлама хăйсен кандидачĕсене Иосиф Виссарионович Сталина, Климент Йефремович Ворошилăва тата Грузи большевикĕсен руководителне Берийа йулташа тăратнă.

Суйлав умĕнхи нумай ҫынлă пухусем Арменире те пулса иртнĕ. Кирăв йачĕпе тăракан синтетически каучук тăвакан комбинат „Совпрен" строительствинче ĕҫлекен рабочисемпе служащисем, Йереванри табак хапрăкĕнчи рабочисем, государствă театрĕнчи рабочисем, артиссемпе служащисем тата государствă университетĕнчи студентсемпе преподавательсем тата служащисем Армйан ССРеспубликĕн Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидатсене Сталин йулташа тата унăн соратникĕсене—Молатăв, Каганович, Ворошилăв, Микойан, Иежов йулташсене тăратнă. Ҫавăн пекех Армйан ССРеспубликĕн Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидатсене Армени большевикĕсен руководителне Арутюнова, республикăн халăх артискине Акопйана, Улойан стахановеца, Аветисан стахановкăпа ҫамрăк учонайа Петросана тăратнă.

(ТАСС).

Сойузлă тата автономлă республикăсенчи суйлав кампанийĕ

АШХАБАД. Туркмен ССРеспубликĕн Ĕҫтăвакан Тĕп Комитечĕ Туркмен ССРеспубликĕн Верховнăй Совет суйлавĕсене 1938 ҫулхи ийунĕн 24-мĕшĕнче иртерме йышăннă.

Туркмен ССРеспубликĕн Верховнăй Совечне суйлама 226 суйлав округĕ тунă.

* * *

БАКУ. Азербайджан ССРеспубликĕн Ĕҫтăвакан Тĕп Комитечĕ Азербайджан ССРеспубликĕн Верховнăй Совет суйлавĕсене 1938 ҫулхи ийунĕн 24-мĕшĕнче иртерме йышăннă. Апрелĕн 24-мĕшĕнчен тытăнса суйлав кампани пуҫланат.

Пурĕ 310 суйлав округĕ тăваҫҫĕ, вăл шутран: Бакура—78, Нахичеван АСС Республикĕнче — 13, Нагорнă-Карабах автономлă облаҫĕнче — 16 пулат.

* * *

ТАШКЕНТ. Узбек ССРеспубликĕн Ĕҫтăвакан Тĕп Комитечĕ Узбек ССРеспубликĕн Верховнăй Совет суйлавĕсене 1938 ҫулхи ийунĕн 24-мĕшĕнче иртерме йышăннă. Апрелĕн 24-мĕшĕнче — суйлав кампани пуҫланат.

395 суйлав округĕ тунă, вăл шутра: Кара-Калпак АСС Республикĕ тăрăх 13 округ тунă.

* * *

АЛМА-АТА. Казах ССРеспубликĕн Ĕҫтăван Тĕп Комитет Президиумĕ Казах ССРеспубликĕн Верховнăй Совет суйлавĕсене 1938 ҫулхи ийунĕн 24-мĕшĕнче иртерме йышăннă. Обществăлла организацисемпе ĕҫҫыннисен обществисен представителĕсенчен 15 ҫынран Тĕп Суйлав Комиссине ҫирĕплетнĕ.

Казах ССРеспубликĕн Верховнăй Совечне суйлама 300 суйлав округĕ тунă.

* * *

Ийунĕн 24-мĕшĕнче Нахичеван АСС Республикĕн Верховнăй Совет суйлавĕсене иртерме йышăннă, ийунĕн 26-мĕшĕнче — Крым, Башкир, Карели, Тутар тата Бурйат-Монгол АССРеспубликĕсен Верховнăй Совет суйлавĕсем пулаҫҫĕ.

(ТАСС).

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕнче

Колхозран кăларнисен апелляцийĕсене пăхса тухасси ҫинчен

Колхозсенчен кăларни ҫинчен пăхса тухман апелляцисем пур пирки, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ ҫапла йышăннă:

1. Райĕҫтăвкомсене ПСК(б)П райкомĕсемпе пĕрле, вăхăта пĕр тăсмасăр колхозсенчен кăларнисен пурин апелляцийĕсене те пăхса тухма, ҫавăн пекех ĕҫсене пăхса тухнă чухне колхозниксене колхозран кăларнă ҫĕрте тунă йăнăшсене тата колхозсенчен кăларнисем ҫине тивĕҫсĕр пăхассине татăклăнах пĕтерме хушас. Ҫак ĕҫсене тунă чухне ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ 1938 ҫулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх ĕҫлесе пымала.

2. Апелляцисене ҫак ҫулхи нойаберĕн 1-мĕшĕнчен кайа йулмасăр пăхса тухса пĕтермеле.

3. Райĕҫтăвком президиумĕн ларăвĕнче апелляцисене пăхса тухнă ҫĕрте колхозран кăларасси ҫинчен решени йышăннă колхоз председателĕ пулмала, ҫавăн пекех ҫав ларăва апелляци паракана чĕнмеле тăвас.

4. Ҫак постановленине тĕрĕс пурнăҫа кĕртсе пыма райĕҫтăвком председателĕпе ПСК(б)П райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ ҫине ответлăх хурас.

(ТАСС).

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Советĕнче

Йалсенчи врачсен участкине ҫирĕплетесси ҫинчен

Йалсенче пурăнакан халăхсене медицинă йенчен пулăшу парса тăрассине лайăхлатас шутпа, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ҫапла йышăнат:

1938 ҫулта йалсенчи врачсен участкисен хисепне 11.785 чухлĕ туса ҫирĕплетес, вĕсенчен: РСФСР-нче — 6.890, Украйинă СС Республикĕнче — 2.290, Белоруҫҫи ССРеспубликĕнче — 455, Азербайджан ССРеспубликĕнче — 405, Грузин ССРеспубликĕнче—645, Армйан ССРеспубликĕнче — 100, Узбек ССРеспубликĕнче — 400, Таджик ССРеспубликĕнче — 110, Туркмен ССРеспубликĕнче —55, Казах ССРеспубликĕнче — 335, Киргиз ССРеспубликĕнче — 100.

1938 ҫулта, вырăнти бюджет тăрăх сывлăха сыхлав ĕҫе вальли панă укҫа-тенкĕсен шучĕпе, фельдшерсемпе акушеркăсен пункчĕсене, халь пуррисен сумне хушса, тата 11 пин пункт уҫас.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, 1938 ҫултан пуҫласа, йалсенчи врачсен участкисене тытса тăрассине йалсенчи бюджетран илсе районти бюджет ҫине куҫармала тунă.

1938 ҫулхи майăн 1-мĕшĕнчен пуҫласа йалсенчи участкăсенчи врачсене ĕҫукҫи парас тĕлĕшпе ҫакăн пек ҫĕнĕ ставкăсем тунă — 350 тенкĕрен пуҫласа 550 тенке ҫитеччен — врач ĕҫ стажне кура. Йалсенчи участкăсенчи врачсене хăйсем илекен тĕп ĕҫукҫи сумне хушса ҫапла тӳлемеле тунă: йалсенчи участкăсенчи амбулатори заведуйущийĕ пулса ĕҫленĕшĕн — уйăха 75 тенкĕ, йалсенчи участкăсенчи больница заведуйущийĕ пулса ĕҫленĕшĕн — уйăха 100 тенкĕ.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ сойузлă тата автономлă республикăсен, облаҫсемпе крайсен ĕҫтăвкомĕсене участкăри врачсене тӳлевсĕр хваттерсем, хутмали тата ҫутатмалисем тупса пама, ҫавăн пекех тата йалсенчи врач участкисене участкă тăрăх тухса ҫӳреме врачсене транспорт ҫителĕклĕн тупса пама хушнă.

Йалхуҫалăх банкне 1938 ҫулта килти хуҫалăха йĕркелесе йама йалсенчи участкăсенчи врачсем валли виҫĕ миллион тенкĕ уйăрса пама хушнă.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йалсенчи участкăсенчи врачсен квалификацине ӳстерес тĕлĕшпе чылай ĕҫсем тума палăртнă.

ССР Сойузĕн Сывлăха Сыхлав Халăх Комиссариатне медицинă институчĕсене наци республикăсемпе облаҫсенчи халăхсенчен вĕренме илес хисепе ӳстерме хушнă. Фельдшерсемпе акушеркăсен шкулĕсене вĕренме илессине ҫапла майпа тумала: вĕренме илнисенчен 50 проценчĕнчен кайа мар вырăнти йалсенчи халăхсенчен пулмала.

Сойузри Халăх Комиссарĕсен Совечĕн постановленийĕ тăрăх, 1938 ҫулта йалсенче ĕҫлеме 4.500 врач йамала.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ райĕҫтăвкомсене йалсенче ĕҫлекен врачсене района йе урăх ĕҫе чĕнсе илме тата урăх вырăна куҫарма чарнă.

(ТАСС).

РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕсене хатĕрленни

РСФСР Верховнăй Советне тата Российйа Федерацине кĕрекен автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйлама суйлав округĕсем тăрăх 90 пине йахăн суйлав участки тăваҫҫĕ. Ку вăл ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлавĕсем вăхăтĕнче РСФСР территоринче пулнă суйлав участкисен хисепĕнчен кăшт нумайрах пулат. Парахутсем ҫинче, йаваҫ йухтарнă ҫĕрте, пойăссем ҫинче те суйлав участкисене ҫĕнĕрен нумай тăваҫҫĕ.

(ТАСС).

Сойузлă республикăсенче майăн 1-мĕшне хатĕрленни

КИЙЕВ. Совет Украйинă ĕҫҫыннийĕсем май уйавне пысăк ҫĕкленӳпе хатĕрленеҫҫĕ. Кийеври хĕрлĕ йалавлă савăтра цехсене илемлетеҫҫĕ, савăт общежитисене йусаҫҫĕ. Праҫник тĕлне савăт территорине ӳсен-тăрансем лартса тухаҫҫĕ.

Житомирте чи лайăх художниксем хулари площадсемпе урамсене илемлетеҫҫĕ. Парксене, скверсене йусаса ҫĕнетеҫҫĕ.

Чернигăв облаҫĕнчи йалсемпе хуласенче праҫник тĕлне урамсене, тротуарсене йĕркене кӳреҫҫĕ, йăвăҫсем лартаҫҫĕ.

ТБИЛИСИ. Тбилисири культурăпа кану паркĕсенче май уйавĕ кунĕсенче халăх гуляннисем, карнавалсем пулаҫҫĕ. Майăн иккĕмĕшĕнче спорт площадкисенче тата „Динамо" стадионĕнче массăлă физкультурă выступленисем туса иртереҫҫĕ. Тбилисири планеродромра Осоавиахим парачĕ пулат.

МИНСК. Республикăри колхозсенче май уйавне хатĕрленеҫҫĕ. Урамсемпе килкартисене тасатаҫҫĕ, пӳртсене илемлетеҫҫĕ. Колхозниксем праҫник тĕлне сĕтел-пукансем, атă-пушмаксем, ҫĕленĕ кĕпе-йĕмсем, мануфактурă, обойсем туйаҫҫĕ. Нумайĕшĕсем ҫĕнĕ пӳртсене пурăнма кĕреҫҫĕ.

Праҫнике харпăр-хăй пултарулăх кружокĕсем тимлĕн хатĕрленеҫҫĕ. Могилев районĕнчи Димитров йачĕпе тăракан колхоз клубĕнче май уйавĕ кунĕсенче 45 ҫынран тăракан колхоз хорĕ йурăсем йурласа парат. Унăн репертуарĕнче — 32 йурă, вăл шутран улттă йурă Белоруҫҫи халăхĕсен йурри. Вĕсене хорта тăракан 60 ҫулхи Боровиков колхозник сăмахĕсенчен ҫырса илнĕ.

(ТАСС).

Политикăлла тата производствăлла активлăха ҫӳле выранă

Йуҫтици Халăх Комиссариатĕнче, Верховнăй судра тата Прокуратурăра ĕҫлекенсен митингĕ йышăннă РЕЗОЛЮЦИРЕН

Епĕр, Чăваш АССР Йуҫтици Халăх Комиссариатĕнче, Верховнăй судра тата Прокуратурăра ĕҫлекенсем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали куна палăртнине саламласа ҫакăн пек обйазательствăсем илетпĕр:

ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйлама хатĕрленнĕ чухне ĕҫленĕ агитатăрсемпе пропагандиссене пурне те ĕҫе хутшăнтарас. Хальхи вăхăтра Трубнăй урамĕнчи суйлавҫăсене суйлав Положенине вĕрентес тĕлĕшпе 13 агитатăр уйăрнă. Чернышевски урамĕнчи суйлавҫăсем хушшинче те агитаципе массăлă ĕҫсене туса пыма тата 22 агитатăр уйăратпăр.

Массăлă-ăнлантарулă ĕҫсене туса пынипе суйлавҫăсене пурнете РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенипе Конституцине вĕренме, суйлава пур суйлавҫăсене те хутшăнтарас тĕлĕшпе йаланах ĕҫлесе пырас.

Социалисăмлă ăмăртăва сарса хамăрăн производствăлла тата политикăлла активлăха ҫӳле ҫĕклес. Йуҫтици органĕнче халăх тăшманĕсем тунă сăтăрҫăла ĕҫсен йулашкийĕсене хăвăртрах пĕтерес.

Хĕрӳлĕн хутшăнатпăр

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариатĕнчи работниксен митингĕ ҫакăн пек резолюци йышăннă:

— РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали кун ҫинчен пĕлтернине итленĕ хыҫҫăн, Финанс Халăх Комиссариатĕнче, Государствă страхованипе государствă кредичĕн управленинче тата 60 №-лĕ перекет кассинче ĕҫлекенсем суйлав кампанийĕ пуҫланнине хĕрӳллĕн саламлаҫҫĕ.

Историллĕ кунра—ийунĕн 26-мĕшĕнче пурте пĕр шухăшлă пулса хамăр сасăсене коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн паратпăр.

РСФСР Верховнăй Советне суйламали кампанине хутшăнса ҫакăн пек обйазательствăсем илетпĕр:

РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положенипе Конституцине тĕплĕн вĕренес. Сталинла Конституципе суйлав Положенисене вĕренес ĕҫре социалисăмла ăмăртăва ăнлăн сарас, организацисенче тăман суйлавҫăсем хушшинче те ҫĕнĕ суйлав саккунне вĕренессине лайăх йĕркелес.

Верховнăй Совет суйлавне хатĕрленес ĕҫ мĕнле пынине ҫтена хаҫатĕнче ҫутатса пырас.

Халăх праҫникĕ—ийунĕн 26-мĕшĕ тĕлне 3-мĕш квартăлта укҫа-тенкĕ пухмали плана 100 процент тултарас, ҫавăн пекех Мордва АССР Финанс Халăх Комиссариачĕпе ăмăртăва тухса илнĕ обйазательствăсене пĕтĕмпех пурнăҫлас.

Шупашкар хула совечĕ ҫумĕнчи финанс секци членне кĕрсе, унăн ĕҫне хĕрӳлĕн хутшăнас.

Колхозниксен митингĕ

СĂКĂТРИ (Патăрйел р.) „Хĕрлĕ йалав" колхозăн уй-хирĕнче апрелĕн 24-мĕшĕнче колхозниксен митингĕ пулса иртрĕ. Митингра РСФСР тата ЧАССР Тĕпĕҫтăвкомĕсем Верховнăй Советсене суйламали кун ҫинчен йышăннă постановленисене тата ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕн Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ апрелĕн 19-мĕшĕнче „Колхозсенче тупăшсене тĕрĕс мар валеҫни ҫинчен", „Колхозниксене колхозран кăлармă чарасси ҫинчен" тата „Йединоличниксен хуҫалăхĕсем ҫине хунă налогсемпе ытти обйазательствăсем ҫинчен" йышăннă постановленисене сӳтсе-йавреҫ.

Колхозниксем постановленисене хĕрӳлĕн саламласа кĕтсе илчĕҫ. Тупăшсене тĕрĕс мар валеҫни „Хĕрлĕ йалав" колхозра та пулнă. Иртнĕ ҫулта 80 пин тенкĕ укҫа тупăшран колхозниксене ĕҫкунĕсем тăрăх пĕр пус та валеҫсе паман. Укҫан илнĕ тупăша хуҫалăхпа администраци расхучĕсене витме салатса йанă. Ҫавнашкалах ҫуршар ҫемйепе кĕнисене колхозран кăларнисем пулнă.

Ҫав йăнăшсене пĕтерме хушса йышăннăшăн колхозниксем партипе правительствăна тав тăваҫҫĕ. Вĕсем ҫуракинĕ ăнăҫлăн, пысăк пахалăхпа иртерме пулчĕҫ. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене Ленин—Сталин ĕҫĕшĕн чĕререн парăнса ĕҫлекен, колхозниксен пуйан та культурлă пурнăҫĕшĕн тăрăшакан ҫынсене суйлама сăмах пачĕҫ.

Н. П.

Ҫĕнĕ ҫитĕнӳсемпе кĕтсе илетпĕр

ҪĔМĔРЛЕ, апрелĕн 23-мĕшĕ (телефон тăрăх). Комбинатри рабочисемпе инженерла-техникла работниксем РСФСР Тĕпĕҫтăвкомĕ РСФСР Верховнăй Советне суйламали кун ҫинчен йышăннине пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕҫ.

Перерыв вăхăтĕнче комбинатри рабочисен пысăк митингĕ пулчĕ. Митинга 900 ҫын ытла пуханчĕҫ. Кунта Ипатăв, Александрăв, Волкăв стахановецсем тухса каларĕҫ.

— Епĕр ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн суйлавне ăнăҫлăн иртертĕмĕр. Пирĕн РСФСР Верховнăй Совечĕн суйлавне татах та лайăхрах хатĕрленмеле,—терĕ Волкăв йулташ.

Митингра пулнисем пурте пĕр сасăпа ҫакăн пек резолюци йышăнчĕҫ:

— Епĕр РСФСР Верховнăй Совечĕн суйлавне производствăра пысăк ҫĕнтерӳ тунипе кĕтсе илетпĕр. Ийунĕн 26-мĕшне — РСФСР Верховнăй Совечĕн суйлав кунне производствă программине ытлашшипех тултарса кĕтсе илетпĕр.

Н. Д. Дмитрийĕв.

Апрелĕн 22-мĕшĕнче „Чебторгин" ертелĕнчи работниксен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухăва служащисем, лавкасенче ĕҫлекен прикащиксем тата рабочисем пуханчĕҫ.

Пухура пулнисем РСФСР Тĕпĕҫтăвкомĕ РСФСР Верховнăй Совечĕн суйлав кунĕ ҫинчен йышăннине хĕрӳлĕн саламлареҫ. РСФСР Верховнăй Советне Ленин—Сталин парти ĕҫне чĕререн парăннă ҫынсене суйлама сăмах параҫҫĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Татах та вăйлатмала

Шăхаль райкомĕ те, пуçламĕш организацисем те партире тăман активпа, сочувствуюшчисемпе тата комсомолецсемпе ĕçлессине аванлатнă. Вĕсене чылай пуçламĕш организацисем (МТС, Шуркасси, Уйкас-Кипек т. ыт.) кружокра ПСК(б)П уставне вĕрентсе пыраççĕ. Комсомол политвĕренĕвне аванлатас майпа парти райкомĕ 15 коммуниста комсомол пропагандисчĕ пулма уйăрса панă.

Райком çумĕнче сочувствующисем валли политграмăта вĕрентмели кружок пур. Вăл кружокра, вĕренÿ çине пуçас тĕлĕшпе, вĕренÿре йулакан пыракансене уйрăмăн пухса вĕрентме тытăнчĕç.

Халĕ парти ретне районĕнче мĕн пурĕ 8 çынна кандидатран члена куçарнă, 17 çын кандидата илнĕ. Уйкас Кипекри кандидатсен групни уйрăмах аван ĕçлет. Парти ретне ĕçре хăйĕн пултарулăхне кăтартнă, тĕрĕсленĕ çынсене илеççĕ.

Иванов Андрей колхоз бригадирĕнче 7 çул ĕçленĕ. Йалан ун бригади колхозра малта пынă. Масса хушшинче вăл авторитетлă. СССР Верховнăй Советне суйлана вăхăтра доверенăй пулса ĕçлерĕ. Халĕ ăна Уйкас Кипек йалсовет председательне лартнă. Вăл хăй пĕлÿне ÿстерессипе те тăрăшса ĕçлет. Иртнĕ çулта политграмăта вĕренсе тухрĕ, халĕ парти историне вĕренет. Ăна сочувствующичен кандидата илнĕ.

Кандидата илнĕ Илйин Йакав 1930 çултанпа комсомолта тăрать. Комсомол организацинче пионер вожатăйĕ, пропагандисĕ, пуçламĕш организацин комитет секретарĕ пулса ĕçленĕ. Халĕ пропагандис пулса ĕçлет, ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕн пленум членĕн кандидачĕ.

Тимофеев Никита, комсомолец, 1936 çулта тракторисра ĕçле пуçларĕ. Вăл малтанхи çулах хăйне панă нормăна ытлашшипех тултарнă. Вăра ăна бригадирсен шкулне вĕренме йанă. Унтан вĕренсе килсен, иртнĕ çулти йăун уйăхĕнче ăна йулса пыракан 4-мĕш бригадăна бригадира лартаççĕ. Вăл хăйĕн бригадине МТС-ра пĕррĕмĕш выранна кăларат, унăн бригадинче кашни трактăр пуçне 1031 гектар сухалана.

Парти ретне илес ĕçре ситменлĕхсем те сахалах мар-ха. Райомĕпе пуçламĕш организацисемпе кандидатсен групписем мĕн пурĕ 11. Вĕсенчен Авăспурт Кипечре çак тарана ситсе те пĕр çын илмен. Ентрийал, Анат Сурăм т. ыт. пуçламĕш организацисенче те пĕрер çын çеç илнĕ.

Партине кĕрес текенсем хăш чухне рекомендаци тупаймасăр чылай çÿреççĕ. Вăл шутран комсомолецсем те пур. Ака Варман Кипечри комсомолец Никишов 5 уйăх хушши рекомендацисем шыранă. Ку ĕнтĕ комсомол райкомĕ комсомолецсене партине парассипе ситтелĕксĕр ĕçленинчен килет.

Райком инструкторĕсем те ситтелĕксĕр ĕçлеççĕ. Вĕсем хайсен участкинчи кандидатсемпе, сочувствуюшчисемпе уйрăмăн ĕçлемесĕр, вĕсене пулăшса пырассине ситтелĕкле туса пымаççĕ.

Малашне ПСК(б)П райкомĕн парти ретне ÿстерессипе татах та вăйлăрах ĕçлемеле. Ку ĕçре пуçламĕш организацисене хытăн пулăшса пымала. Çавăн пекех комсомолецсемпе тата сочувствующичисемпе ĕçлессине йалан тĕрĕслесе пымала.

С. Соколов.

Партин йертсе пыракан органĕсене çĕнĕ çынсем пыраççĕ

ЕЛЕК. Райопра отчотпа суйлав пухăвĕсем пысăк активлăхпа иртеççĕ. Коммунистсем отчотпа суйлав пухăвĕсене активлă хутшăнаççĕ. Вĕсем партин йертсе пыракан органĕсене ситтелĕкле тĕрĕслене, пирĕн партишĕн вĕçĕ-хĕррисĕр парăнса ĕçлекен, халăх тăшманĕсемпе кĕрешес ĕçре тĕрĕсленĕ тата коммунистла партин ĕçне вĕçне ситийĕхсах сыхласа тăма пултаракан больщевиксене суйласа хăвараççĕ. Халиччен партин 9 пуçламĕш организацинче суйлав пулса иртнĕ. Вĕсенчен 7 организацинче парторг пулса ĕçлеме çĕнĕ çынсене суйланă.

Васкассинчи пуçламĕш организацинче парторг пулма Максимов коммуниста, Ленин—Сталин партийĕшĕн чĕререн парăнса ĕçлекен çирĕп коммуниста суйланă. Вăл Александровкăнчи „Красное Сормово" колхоз председатĕлĕ пулса ĕçлет. Унăн колхозне Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкинче пулма кандидата çирĕплетнĕ. СССР Союзĕн Верховнăй Советне суйлана вăхăтра Максимов участкăри суйлав комиссин председателĕ пулса ĕçленĕ.

В. Йефремов.

Пухусем активлăн иртеççĕ

Вăрмар районĕнче парти организацин отчотпа суйлав пухăвĕсем апрелĕн 17-мĕшĕнче пуçланчĕç. Пайанхи куна ПСК(б)П райкомĕн отчотне „Спортинвентарь" хапрăкĕ, МТС, райсорĕç пайĕ тата ПСК(б)П райкомĕ çумĕнчи парти пуçламĕш организацисенче итлене.

Парти пухăвĕсем пысăк активлăхпа пулса иртеççĕ. „Спортинвентарь" хапрăкĕнче 10 коммунистран ПСК(б)П райкомĕн отчочĕ тăрах прениире 8 çын тухса каласнă.

Тухса каласакан коммунистсем малтанах ПСК(б)П райкомĕ йенчен парти пуçламĕш организацинче ситтелĕксĕр пулăшнине кăтартса параççĕ. Парти райкомĕ, партилĕ-массăлă ĕçе вăйлатса пырас выранне, хуçалăх ыйтăвĕсемпе ытларах ĕçлесе лартнă.

Е. Филиппов.

ПСÇЛКС Тĕпкомĕн V-мĕш пленумĕн решенисене вĕренес тата пурнăçлас ĕçсем мĕнле пыни çинчен

ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕн III-мĕш пленумĕ йышăннă постановлени

ПСÇЛКС Тĕпкомĕн V-мĕш пленумĕн решенийĕсене комсомол Чăваш организацийĕ пĕр чунлăн, пысăк кăмăлпа, ырласа йышăнчĕ. Вăл решенисем комсомол организацийĕсене комсомолецсене ПСÇЛКС ретĕнчен кăларнă чухне тата комсомолран кăларнисен апелляцийĕсене пăхса тухнă чухне уйрăмах туна йăнăшсене больщевикла тÿрлетме тата комсомол организацийĕсен ĕçĕнчи ситменлĕхсене тата тăкăлан пĕтерсе пыма мобилизацилеççĕ.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленумĕ „Парти организацийĕсен коммунистсене партирен кăларнă чухнехи йăнăшĕсем çинчен, партирен кăларнисен апелляцийĕсене çине формальнă-бÿрократла пăхни çинчен тата çав çитменлĕхсене пĕтермели майсем çинчен" йышăннă постановлени тата ПСÇЛКС Тĕпкомĕн V-мĕш пленумĕн решенийĕсем ПСÇЛКС Чăваш организацине пĕтĕмпех тивеççĕ.

ПСÇЛКС членĕсем çине, уйрăмăнах комсомолецсене ПСÇЛКС ретĕсенчен кăларас ыйтăва татса панă чух, тимлĕн тата кашни патне уйрăмăн пырса, сисĕмлĕн пăхмали çинчен Сталин йулташ комсомол организацисене тата ПСÇЛКС руководителĕсене пĕр хут çеç мар кăтартса панă.

Çапах та, парти кăтартăвĕсене тата ПСÇЛКС Тĕпкомĕн решенийĕсене пăхмасăр, комсомол организацийĕсемпе вĕсен руководителĕсем ПСÇЛКС ретĕсене фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла агенчĕсенчен тасатас тĕлĕшпе ĕçленĕ хушăра пысăк йăнăшсем тата пăсăклăхсем туса пăрахрĕç; çав йăнăшсемпе пăсăклăхсем ПСÇЛКС ретĕсене халăх тăшманĕсенчен тасатма кансĕрлеççĕ.

Комсомол организацийĕсем йулташсене тăшмансемпе хутшăнтарса больщевисăмă йут практикăпа ĕçлени çинчен, партипе совет влаçне парăнса ĕçлекен тÿрĕ комсомолĕцсенех, хăйсене страхлас майпа тата сыхă тăнă пек кăтартасшăн пулса, ПСÇЛКС ретĕсенчен чуххăмăн, сăлтавсемсĕрах кăларни, вĕсене ĕçрен, вĕренÿ заведенийĕсенчен кăларттармала туни, час-часах тÿрĕ комсомолĕцсенех нимле сăлтав пулмасăрах халăх тăшманĕ йе тăшмансене пулăшакан тесе йат пани çинчен калакан фактсем сахал мар.

Çынсене ним сăлтавсăрах „тăшманла елемент" йе „халăх тăшманĕсене пулăшакан" тесе комсомолран массăлăн кăларнисемпе уйрăмăнах Тутаркас, Патăрйел, Улатăр тата Шупашкар хули организацийĕсем тăрлавсăр пулса тăраççĕ.

Тутаркас районĕнче „тăшманла елементсем", „двурушниксем" тата „халăх тăшманĕсемпе çыхăннăскерсем" тесе 1937 çулта комсомолран 27 çынна кăларнă. Комсомолран кăларнисенчен чылайĕшне учитĕлсем, вĕсене халăх тăшманĕсемпе—Пожеданаавпа тата Русаковпа сыхланнăшăн айăплана. Тĕрĕслесе пăхнă хыççăн, комсомолран кăларнисенчен чылайĕшне комсомола калла илни палăрчĕ.

Шалти суту-илÿ Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи комсомол пуçламĕш организацийĕ—пĕр çершывра социализм тăвакан çĕнтерес пирки ыйтăва тĕрĕс ăнланса илсе, тĕрĕс анлантарнăшăн тата ку тĕлĕшпе уйрăм йулташсем (Федоров, Петров, Нилов т. ыт.) йăнăш шухăшсене хирĕç тăнăшăн—комсорг пулса ĕçлекен Çмирнов йулташа ĕçрен тата комсомолран кăларнă. ПСÇЛКС Шупашкар хула комитечĕ ĕçе тĕплĕн пăхса тухса, Çмирнов йулташа пĕтĕмĕшпех тÿрре кăларас выранне, ăна йатламала туса хăварнă.

Патăрйел педучилищинчи комсомол организацийĕ темиçе кун хушшинче ПСÇЛКС ретĕсенчен 18 çынна кăларнă, вĕсенчен чылайĕшне „халăх тăшманĕ Ирицковпа" çыхăву тытнăшăн айăпланă. Тĕрĕслесе пăхнă хыççăн, педучилищăри комсомолецсене союзран сăлтавсăр кăларни палăрнă.

Улатăрти пăравуссем йусакан савăтра комсомолецсен ПСÇЛКС Чăваш организацин XIV-мĕш конференцийĕн ĕçĕсене сÿтсе-йавма пуçтарнă пухăвĕ 8 кун хушши тăсалнă, унта „шанчăксăр", „подозрителнăй" комсомолецсен спискине сÿтсе-йавнă. Çакăн пек „ĕçленĕ" хыççăн, пуху комсомолран 6 çынна кăларнă. Тĕрĕслесе пăхсан, 5 çынна комсомолран сăлтавсăр кăларни палăрнă.

Комсомол организацийĕсен уйрăм руководителĕсем партипе совет влаçне парăннă тÿрĕ комсомолĕцсене „тăшмансемпе çыхăннă" тесе комсомолран чуххăмăн кăларнипех чăранса тăман, комсомол организацийĕсемпе йертсе пыракан уйрăм работниксем сĕннĕ тăрăх, комсомолран кăларнисене час-часах ĕçрен те кăларнă.

ПСÇЛКС Çĕмĕрле райкомĕ Çĕмĕрле вăтам шкулĕнче аслă вожатăй пулса ĕçлекен Чиркунов йулташа, партинчен кăларнă шкул директăрĕ — „троцкис" Сырцовпа çыхăну тытнă тесе, комсомолран тата ĕçрен кăларнă. Сырцов йулташа парткоплеги партине кайала илнĕ. Анчах ПСÇЛКС Çĕмĕрле райкомĕ хăйĕн Чиркунов тĕлĕшпе туна йăнăшне ПСÇЛКС Обкомĕ хутшăнсан çеç тÿрлетнĕ.

Сычова (Дортранс работникĕ пулнăскере) партинчен кăларнă хыççăн, ПСÇЛКС Йетĕрне райкомĕ, Г. А. Сычова активлă комсомолка тата лайăх учителница пулнине пит аван пĕлсе тăнă çинчех, ăна, хăйĕн пиччĕшĕпе, Сычовпа, çыхăну тытнăшăн комсомолран кăларнă. Часах Сычовăн упăшкине те, Степанова, учителтен кăларнă, вара вĕсем икĕ уйăх хушши ĕççĕр пурăннă. ПСÇЛКС Обкомĕ хутшăнсан çеç, Сычовăпа Çтепанăв йулташсене комсомола та, ĕçе те кайала илнĕ.

ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕн çекретарĕсем пулнă Сымокинпа Терентйев йулташсене, ПСÇЛКС Шупашкар хула комитечĕн çекретарĕ пулнă Чекмарйов йулташа, „Çамрăк колхозник" хаçат редактăрĕ пулнă Йашевский йулташа, редакци çекретарĕ пулнă Митрофанăв йулташа нимле сăлтавсăрах халăх тăшманĕсем тата вĕсене пулăшакансем тесе комсомолран тата ĕçрен кăларнă.

ПСÇЛКС Обкомĕн пленумĕ çак йăнăшсемпе пăсăклăхсем ПСÇЛКС Тĕпкомĕн инструкторĕ Мищакова йулташ облăçри XIV-ш конференцинче тÿрĕ комсомолĕцсенех „халăх тăшманĕсем", „двурушниксем", „провокатăрсем" тесе йат парса тĕрĕс мар çул çине тăнă пирки пулнине паллă тăвать. Комсомолран кăларнă чухне тата комсомолран кăларнисен апелляцийĕсене пăхса тухнă чухне комсомолĕцсем çине чуххăмăн, формальнă-бÿрократла пăхассине Обком бÿровĕ вăхăтра пĕтереймен, тÿрлетмен, уң выранне ПСÇЛКС Обком бÿровĕн уйрăм членĕсем хăйсем те комсомолăн районри активĕсенче комсомолĕцсене ПСÇЛКС ретĕнчен кăларма май парса сойуз демократине пăснă.

ПСÇЛКС ретĕсене фашисăмăн троцкисла-бухаринла агенчĕсенчен тата буржуалă-националиссенчен тасатас ĕçре „Çамрăк больщевик" хаçат комсомол организацисене пысăк пулăшу пачĕ. Кунпа пĕрлех, нимĕн сăлтавсăр тÿрĕ комсомолĕцсенех вараласа, йулташсене тăшмансемпе хутăштарса, больщевисăмшăн йут практикăпа ĕçленисем те сахалах мар пулнă хаçатăн.

ПСÇЛКС Обкомĕ тата ПСÇЛКС районри комитечĕсем чылай практикăлă ĕçсем туна пулин те,—пленум решенийĕсене комсомол пуçламĕш организацисен районсенчи тата хуласенчи актив пухăвĕсенче сÿтсе-йавса вĕреннĕ,—пулнă йăнăшсене тÿрлетесси çапах та вараххăн пулса пырать. ПСÇЛКС Обкомĕнче пайанхи куна çитсе те 130 апелляцине пăхса тухман. ПСÇЛКС Тĕпкомĕн V-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурнăçласси уйрăмăнах Ишлей, Тутаркас, Улатăр организацисенче начар пырать.

ПСÇЛКС Тĕпкомĕн пленумĕ нацилĕ республикăсемпе облаçсенчи комсомол организацийĕсене комсомолăн организацилĕ-политикăлă ĕçĕ çамрăксен ÿсĕмĕнчен йулса пыни çинчен асăрхаттарчĕ; йулса пыни чи малтан комсомол организацисен идейлă-воспитани ĕçĕ çителĕксĕрринче пулать. Пленум: „Çамрăксене ĕççыннисен революцичченхи пурнăçĕпе паллаштармасăр, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе рабочи клас ĕлĕк пусмăрта пулнă халăхсене нацилĕ пусмăрпа чуралăхран хăтарассишĕн паттăрăн кĕрешнипе çителĕклĕ паллаштармасăр, комсомолăн Азербайджан, Узбекистан тата Казахстан Тĕп Комитечĕсем пысăк йăнăш тăваççĕ", тесе кăтартса хăварчĕ. Пленумăн çак кăтартăвĕсем ПСÇЛКС Чăваш организацине пĕтĕмĕшпех тивеççĕ. Сăмахран, Патăрйел районĕнче политвĕренĕве 130 комсомолĕца йавăçтармасăр хăварнă, Вăрнар районĕнче—290, Ишлей районĕнче—196, Шупашкар хула организацийĕнче—370 çын, комсомолĕцсен политвĕренĕвĕн пахалăхĕ куçа кĕретенĕх начар пулни çинчен каламали те çук.

Пленум комсомол организацисем çамрăк хĕрарăмсемпе хĕрсем хушшинче йапăх ĕçлесе пынине паллă тăвать. Комсомолăн йертсе пыракан органĕсенче хĕрсем питех те сахал, 25 райкомпа пĕр хула комитечĕн çекретарĕсенчен иккĕшĕ çеç хĕрсем.

Комсомолăн облаçри организацийĕнче малта пыракан совет çамрăкĕсене комсомола илессине питех те начар йĕркеленĕ. Организацилĕ-политикăлă ĕç çамрăксен ÿсĕмĕнчен йулса пынине уйрăмăнах уççăн кăтартакан тĕслĕх пулса тăрать вăл.

ПСÇЛКС Обкомĕн пленумĕ çапла йышăнать:

1. ПСÇЛК Сойузĕн пĕтĕм райкомĕсене тата Шупашкар хула комитетне ПСÇЛКС Тĕпкомĕн V-мĕш пленумĕн решенийĕсене кашни çамрăк ăстанĕ патне çитмеле анлăн ăнлантарса пама хушас.

Комсомолран кăларас йе кăларнисене каллех комсомола илес ыйтусене пăхса тухнă чухне уйрăм комсомолĕцсен ăраскалĕ çине чунсăр, формальнă пăхас практикăна ним йулмиччен пĕтермеле. ПСÇЛКС ретĕнчен массăлăн, чуххăмăн кăларассине тatăклăнах пĕтерсе хумала.

Пур комсомол комитечĕсене те каллех комсомолта тăмала тунисене комсомол документчĕсене ним тăхтаса тăмасăр, çийĕнчех пама тата вĕсене комсомол организацийĕсен ĕçне хутшăнтарма хушас.

2. ПСÇЛКС Обком бÿровне комсомолран кăларнисен апелляцийĕсене ПСÇЛКС Тĕпкомĕн пленумĕ кăтартнă срукра пăхса тухма хушас.

3. ПСÇЛКС Обком бÿровне, райкомсене тата ПСÇЛКС Шупашкар хула комитетне ПСÇЛКС Тĕпкомĕн пленăмĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртме чăрмавлакансемпе, вĕсене пурнăçа кĕртессине хирĕç тăракансемпе тatăклăн кĕрешсе пыма хушас.

4. „Çамрăк больщевик", „Пионер сасси" хаçатсен редакцийĕсене туна йăнăшсене пĕтĕмĕшпех йусама, ПСÇЛКС ретне кайала илнисене, вĕсем çинчен пичетре елеклесе çырнă пулсан, пĕтĕмĕшпех тÿрре кăларма хушас.

5. ПСÇЛКС Обкомне тата райкомĕсене комсомолри, хуçалăхри тата советри йертсе пырас ĕçе çамрăк кадрсене хăйулăн лартса пыма тата вĕсене тивĕçлĕ пулăшу парса тăма хушас.

6. ПСÇЛКС райкомĕсене тата Шупашкар хула комитетне пĕтĕм комсомолĕцсене политвĕренĕве йавăçтарма, кружоксемпе шкулсен ĕç пахалăхне лайăхлатма пур майсене те йышăнма, пропагандисĕмпе агитатăрсене конкретла пулăшу парса пыма хушас.

7. Республикăри комсомол организацисен чи паха задачи—комсомол пуçламĕш организацийĕсен, уйрăмăнах колхозсемпе предприйатисенчи организацисен ĕçне лайăхлатасси, вĕсене малта пыракан совет çамрăкĕсен массăлă паттăр организацийĕсем туса хурасси пулать, тесе шутлас.

8. Çамрăк хĕрарăмсемпе хĕрсем хушшинче ĕçлессине çине тăрсах лайăхлатмала, вĕсене общĕствăлă политикăлă тата производствăлă пурнăçне активлăн йавăçтарса пымала. Хĕрсене комсомолри, хуçалăхри тата советри йертсе пырас ĕçе лартассине вăйлатмала.

„Çамрăксене хĕрарăмсемпе хĕрсем çине хисеплесе тата йулташла пăхма, совет моралне тата хĕрарăмсен правине хÿтĕлекен совет саккунĕсене пăснине кăтартакан конкретлă фактсене тÿсейми пулма вĕрентмеле". (ПСÇЛКС Тĕпкомĕн V-мĕш пленăмĕн решенийĕнчен).

9. Културăпа çутĕç учреждениСен (клубсен, вулав çурчĕсен) ĕçне лайăхлатмала. Çак майпа вĕсенче харпăрхăй пултарулăх кружокĕсене (физкултура, оборона, драма т. ыт. те) организацилемеле. Апрелĕн иккĕмĕш çурринче май уйăхĕнче вулав çурчĕсен пуçлăхĕсем пулса ĕçлеме 200 комсомолец йарас.

Пленум пĕтĕм комсомолĕцсене халăх тăшманĕсене хирĕç тatăклăн кĕрешме, пирĕн ретсене хĕсĕнсе кĕрсе, унта хăйсен сутăнчăкла ирсĕр ĕçĕсене туса пырасшăн, хăйсен тăшманлăхне сисĕмлĕх çинчен ултавлăн кăшкăрнипе пытарса комсомолра пытанса йулма тăрăшакан вăрттăн тăшмансене пĕтĕмпех шыраса тупса, вĕçне çитиччен пĕтерсе хума чĕнет.

Массăпа çителĕксĕр ĕçленĕ

Стройтрестри парторганизаци çуртйĕр строителстви техникумĕнче, пройектсем тăвакан конторăра, Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссариатĕнче тата Стройтрестра ĕçлекен коммунистсене пĕрлештерсе тăрать. Шупашкарти строителствă ăнăçлăн пурнăçланасси çак тăватă учрежденири коммунистсем мĕнле ĕçленинчен, вĕсем ку ĕçе йертсе пыма пултарнинчен килет.

Халăх тăшманĕсем троцкисла-бухаринла бандитсем—буржуалă националистсем çуртйĕр строителствинче те хăйсен сăтăрла ĕçне турĕ. Хулари пысăк строителствăсенче (електростанци, 26 хваттерлĕ çурт) сăтăрла планĕсене çийĕнленĕ.

Парторганизаци, партире тăман рабочисемпе служащисене хăй тавра пĕрлештересе, сăтăрла ĕçсен пулăшкийĕсене хăвăртрах пĕтермеле, анчах ку ĕç питĕ вараххăн пырать-ха.

Партком çекретарĕ Чиганайĕв йулташ отчотпа суйлав пухăвĕнче тунă отчотлă докладĕнче парторганизацинчи çитĕнÿсемпе çитменлĕхсем çинчен каласа пачĕ.

Парторганизацинчи çитĕнÿ вăл коммунистсем хушшинче Ленин—Сталин вĕрентĕвĕне хĕснашалланат ĕç лайăхланни, коммунистсем вĕренсе ÿсе пыни. Иртнĕ çулсенче Худйакова, Михейĕв коммунистсем пухусенче те, халăх хушшинче ĕçлессине те хăйсен активлăхне кăтартман пулсан, халĕ политикулра лайăх вĕренме пуçланăранпа, вĕсен активлăхĕ тата пултарулăхĕ ÿсет пырать. Вĕсем пухусенче кирлĕ сĕнÿсем параççĕ, рабочисем хушшинче политвоспитани ĕçне организацилеççĕ. Иртнĕ çулхисемпе танлаштарсан, кăçал парторганизаци рабочисем хушшинче политикăла агитаци ĕçне пысăк çитĕнÿсем тунă.

Партком ĕçĕнчи тĕп ситменлĕх,—тет Чиганайĕв йулташ,—ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти Пленумĕн решенийĕсене кирлĕ пек пурнăçламанни. Епĕр коммунистсен пухăвĕсенче Парти Тĕпкомĕн Пленум решенийĕсене сÿтсе-йаврăмăр, анчах партире тăман рабочисем хушшинче çителĕклĕ ăнлантарса паман. Ку ĕнтĕ епĕр Тĕпком Пленумĕн решенийĕнчен кирлĕ пек вывăд туса илейменни çинчен калат.

Стройтрест руководителĕсем тунă йăнăшпа усă курса, тăшманла елементсем: „Бардышĕв деçатнике строителствăри руководителсене критиклеиĕшĕн ĕçрен кăларса йанă, астăвăр, рабочисем, самокритикă мĕн патне илсе пыма пултарать",—тенĕ суйа сăмах çÿретнĕ. Рабочисем ун пирки шикленнисем те пулна. Анчах партком çав провокацилĕ суйа сăмаха пĕтерсе лартса, больщевикла самокритикăна сарас тесе начар ĕçленĕ. Çавăн пекех Строителсен клубĕ çумĕнче тухса тăракан стена хаçачĕ те критикăпа самокритикăна анлăн сарса йарассишĕн тăрăшман. Рабочисем ситменлĕхсем пирки çырнă заметкăсем ик-виç уйăх хушши „почтă йешчĕкĕсенче" выртнисем те пулнă. Парткомпа стена хаçат редакцийĕ ĕç çине сÿрĕкĕн пăхнипех елекçĕсем хаçатпа хăйсене майлă усă курнă. Акă, çуртйĕр строителстви техникумĕнче ĕçленĕ преподавател Ваçилйĕв техникум дирекцийĕ çинчен тата уйрăм коммунистсем çинчен елеклĕ материалсем пичетлесе кăларттарнă.

Парторганизаци рабочисем хушшинче политикăла воспитани ĕçне организацилĕ пырать. Суйлав иртнĕренпе докладсемпе лекцисем 41 хут туса панă.

Анчах, çавăнпа пĕрлех, ситменлĕхсем те нумай-ха. Тĕп ситменлĕх—рабочисене уйрăм бригадăсем, цехсем тăрăх пуçтарса пĕчĕк пухусем иртерменни, стахановецсен йышне ÿстерессипе ĕçлемени, стахановецсен ĕçри паха опытне ытти рабочисене парассине организацилеменни.

Парти ретне ÿстерессишĕн строителствăра ĕçлекен рабочисем — стахановецсем шучĕпе пулса пымала. Партком стахановецсемпе ĕçлемен пирки, парти ретне стахановецсенчен пĕр çынна та илмен. Партине кĕрес текенсем нумай чухне рекомендацисем тупаймасăр чăрманса тăраççĕ. Хăшпĕр коммунистсем çынна пĕлесçĕ пулин те рекомендаци памаççĕ. Акă, Простаков йулташ патне рекомендацишĕн темиçе çын та пынă. Вĕсене вăл йаланах: „Епĕ командировкăна тухса кайатăп, сана партине илнĕ чухне пухура пулаймастăп, тусăм",—тесе сăвăрса йарат.

Партком çекретарĕ Чиганайĕв йулташ хăйĕн отчотлă докладĕнче пĕлтĕрхи отчотпа суйлав пухăвĕ парса хăварнă наказ çинчен асăнчĕ. Анчах çав наказа мĕнле пурнăçланине тĕплĕн кăтартмарĕ.

Парти пухăвĕсене хатĕрленсе иртерессипе кунта ĕç лайăх тăрат темеле. Парти пухăвĕнче мĕнле ыйтусем сÿтсе-йавасси çинчен ик-виçĕ кун малтан пĕлтерсе хураççĕ. Çапла пулин те хăшпĕр коммунистсем (Каплин, Ваçилйĕв) йе командировкăна кайнă, йе чирленĕ тесе час-часах пухăва пымасăр йулаççĕ.

Партком панă порученисене уйрăмăнах, Простаков, Михейĕв, Васенцов тата Каплин йулташсем питĕ начар пурнăçлаççĕ. Акă, тĕслĕхрен: Простаков йулташа Осоавиахим организаци ĕçне йĕркелесе йама хушнă. Вăл нимĕн те тумасăр Осоавиахим организаци ĕçне йухăнтарнă.

Комсомол организацине пулăшса пырассипе те партком начар ĕçленĕ. Çавăнпах ĕнтĕ лайăх, примерлă комсомолĕцсене парти ретне илесси тытăнса тăрать.

Партком çекретарĕ пур ĕçе те хăй пĕччен туса пыраймании, ăна партком членĕсемпе кашни коммунисах пулăшса пымали пуриншĕн те паллă йапала. Анчах нумай чухне партком членĕсемпе хăшпĕр коммунистсем ĕçре çителĕклĕ пулăшса пыман.

— Епĕр партком пĕтĕмпех начар ĕçленĕ теме пултараймастпăр. Иртнĕ çулсемпе танлаштарсан, нумай çитĕнÿсем тунă курăнат. Çавăнпа пĕрлех çитменлĕхсене те палăртмала. Партком стахановецсемпе, рабочи активиссемпе куллен-кун тимлĕн ĕçлесе пыманнипех пирĕн парторганизаци служăщисен шучĕпе кăна ÿсет. Профсойуз тата ирĕклĕ организацисен (Осоавиахим, МОПР) ĕçне кирлĕ пек йĕркелемен. — тет Захарăв йулташ.

Партком строителствă ĕçне питĕ тĕплĕн пĕлсе, унти çитменлĕхсене вăхăтра пĕтермеле. Ку тарана çитсе партком вăл тĕлĕшпе сахал ĕçленĕ-ха. Строителствăра план тăрăх ĕçлеменнипе строителствă валли кирлĕ материалсене (кирпĕч, цемент, тимĕр балкăсем, пĕренесем) вăхăтра тăратман пирки хăшпĕр чухне ĕç чăрănса тăрат. Анчах партком çавна курмаст, вăл çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерме тăрăшни çук. — тет Лунинарский йулташ.

Парти поручениие коммунистсем мĕнле пурнăçласа пынине çийĕнчех тĕрĕслени—питĕ пысăк ĕç. Вăл коммунистсен дисциплинине хăпартать, ĕçлеме вĕрентет. Анчах парторганизаци ăна пурнăçламаст-ха. Парторганизаци рабочисен арăмĕсене больщевикла воспитани парас ĕçе ку тарана çитсе те кирлĕ пек организацилемен.

Стройтрестри парторганизаци умĕнче халхи вăхăтра тăракан задачăсенчен пĕри — вăл строителствăра ĕçлекен рабочисемпе служăщисен хушшинче политикăла воспитани ĕçне тĕпренех çĕнетсе, лайăхлатса йарасси, парти ретне стахановец, ударник рабочисем шучĕпе ÿстересси, парторганизаци йышăннă решенисем мĕнле пурнăçланса пынине тĕрĕслесси тата халăх тăшманĕсем тунă сăтăрлă ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерессипе хастарлăн ĕçлесе пырасси пулса тăрать.

Отчот тăрăх прениире 15 çын тухса каларĕç. Вĕсем пурте партком ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртса, малашне мĕнле ĕçлемели çинчен лайăх сĕнÿсем парса хăварчĕç. Пуху партком çителĕклĕ ĕçленĕ тесе хак пачĕ. Партком çекретарĕ пулса ĕçлеме Чиганайĕв йулташах суйласа хăварчĕç.

Н. Косойкин.

Трахомран сыватас ĕçе хăвăртлатмала

Йетĕрне районĕнче трахомлă çынсен хисепĕ халĕ те чылай пысăк-ха. Анчах вĕсене трахомран сыватас ĕç кăçал та иртнĕ çулхи пекех ÿрĕк-сÿрĕккĕн пулса пырать. Районри сывлăх пайĕ (пуçлăхĕ Перлович йулташ) йалсенчи трахпунктсене çителĕклĕ пулăшу парса пыраймаст, трахработниксене вĕрентсе хатĕрлемест.

Иртнĕ çулта районра 12 трахпункт ĕçленĕ пулсан, кăçал 7 трахпункт кăна ĕçлет, ытти трахпунктсем трахработниксем çуккипе хупă лараççĕ. Çавна пулах ĕнтĕ Уйкас йалсоветĕнче 58 çын, Ирçере 70 çын, Тушкассинче 127 çын, Асламас йалсоветĕнче 118 çын трахом чирĕнчен сывалаймаççĕ, Тури Ачакри трахпунктра ĕçлекен Гладков трахомлисене емеллес тĕлĕшпе пачах ĕçлемест. Çавнашкалах Каташ, Тури Мучар, Мăн-Чураш йалсовечĕсенчи трахпунктсем те çителĕклĕ ĕçлесе пыраймаççĕ-ха. Вĕсем халăха трахом чирĕн сийĕнĕ çинчен ăнлантармаççĕ.

Сарйелĕнчи трахпункт (трахработник Куçмин йулташ), Хунашри трахпункт (трахработник Свешникăв йулташ) авантарах ĕçлеççĕ.

Районри сывлăх пайĕнче ĕçлекенсен трахома пĕтерес ĕçе тивĕçлипе организацилемелĕ, трахпунктсенче ĕçлекенсене куллен пулăшса кăтартусем парса тăмала.

Ник. Цветк

К

1938 ҫулхи ҫураки

Ӗҫсене пысӑк пахалӑхпа туса пыраҫҫӗ

ТРАК, апрелӗн 24-мӗшӗ (телефонпа). Упири „Коминтерн" колхоз иккӗмӗш кун суртуррисем акат. Плугӑпа сухалакансем, сӳрелекенсем, сеялкӑсемпе ӗҫлекенсем пурте ӗҫе пысӑк пахалӑхла тавассишӗн ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. Ӑмӑртура иккӗмӗш бригада малта пырат. Колхозниксем нормӑна ытлашшипех тултарса пыраҫҫӗ. Акӑ, В. Никифӑрӑв колхозник 11 ретлӗ сеялкӑпа 6 гектар таран акса пырат.

Колхоз кӑҫал пӗтӗмпех йаровизациленӗ вӑрлӑхсемпе акса хӑварат. Г. Михайлӑв, Л. Степанӑв колхозниксем вӑрлӑхсене йаровизацилес тӗлӗшпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ.

„Коминтерн" колхоз кӗрхи калчасене апат парас тӗлӗшпе тӑрӑшса ӗҫлерӗ. Кӗр калчисене 9 гектар ҫинче тислӗк шӑвӗкӗпе, 26 гектар ҫинче лайӑх ҫӗрсе ҫитнӗ тислӗкпе, 16 гектар ҫинче кали тӑварӗпе, 22 гектар ҫинче суперфосфатпа апат панӑ, 8 гектар ҫине йаровизациленӗ махорка акса хӑварнӑ. Колхозра пур ӗҫсем те пахалӑхла пулса пыраҫҫӗ.

Бригадӑсем уйра ӗҫлени ҫӗрте культмассӑлла ӗҫе лайӑх йӗркеленӗ. Полит-вулавҫӑсем кашни кунах уйра колхозниксене тӗрлӗрен хаҫат-журналсем вуласа параҫҫӗ. РСФСР тата ЧАССР Верховнай Совечӗсене суйламали Положенисем ҫинчен ӑнлантараҫҫӗ. Колхозра столовӑй ӗҫлет.

Вӑрлӑх йаровизацилесси кайа йулат

ТРАК, (телефонпа). Апрелӗн 22-мӗшне районра клевӗр акас плана 95 процент тултарнӑ. Ҫак кун Буденнӑй, Каганович йачӗпе тӑракан тата „Большевик" колхозсем суха туса тухрӗҫ. Унсӑр пуҫне „Свобода", „Шимар", „Нимӗҫ", „Ҫӗнӗ пурнӑҫ", „Ҫентерӳ" тата Ильич йачӗпе тӑракан колхозсем кӗр ҫӗртме сухине ҫӗрӗпе тытаҫҫӗ. Районра кӗрхи ҫӗртме сухине пурӗ 560 гектар сӳреленӗ.

Буденнӑй йачӗпе тӑракан колхозра колхозниксем уйра ӗҫленӗ ҫӗрте культмассӑлла ӗҫе лайӑх йӗркеленӗ. Колхозниксем кашнӑ вӑхӑтра вӗсене вулавҫӑсем тӗрлӗрен хаҫат-журналсем вуласа параҫҫӗ, РСФСР тата ЧАССР Верховнай Совечӗсене суйламали Положенисем ҫинчен ӑнлантараҫҫӗ. Кашни бригадӑра стена хаҫачӗсем тухса тӑраҫҫӗ. Колхозра пӗрлешӳлӗ столовӑй та пур.

Колхозсенче вӑрлӑхсене йаровизацилес ӗҫ кайа йулса пырат. Апрелӗн 22-мӗшӗ тӗлне пурӗ 784 центнер вӑрлӑх йаровизацилесе, плана 17 процент ҫеҫ тултарнӑ.

И. Хатайӗвски.
М. Иванов.

Пӗтӗмпех йаровизациленӗ

ТУТАРКАС, (телефон тӑрӑх). Кашмаш ялсовечӗнче кӗрекен „Свобода" тата Шмидт йачӗпе тӑракан колхозсем кӑҫалхи ҫуракинче районра чи малтан тухрӗҫ. Шмидт йачӗпе тӑракан колхоз апрелӗн 21-мӗшне 8 гектар ҫине пӗрчӗлӗ тӑпа акрӗ. Кунта акмали вӑрлӑхсене пӗтӗмпех йаровизацилесе хатӗрленӗ.

И. Ҫмирнов.

Калчасем мӗнле хӗл каҫнине хӑвӑртрах пӑхса тухар

Калчасем, ытти ӳсен-тӑрансем пекех, хӗл каҫиччен пӑсӑлма та, пӗтме те пултараҫҫӗ. Пелтӗр Чӑваш республикин уй-хирӗнче пурӗ 25923 гектар калча пӑсӑлнӑ, вӗсенчен шӑпса ҫӗрнипе 16552, пӑр ҫапнипе 9100, чирленипе тата сийенлӗ хуртсем ҫинипе 166,5 гектар тата шӑрхӑпа 104,5 гектар пӗтнӗ.

Анчах хӑшпӗр колхозсем, колхозниксемпе йединоличниксем те савсем ҫинчен госстраха пӗртте пӗлтермен, йе, саккун хушнӑ срукран иртсен тин пӗлтернипе, илмели укҫанӑх илеймесӗр йулнӑ. Нумай чух колхозсем сийен ҫинчен ҫӗрӗҫ пайне пӗлтернипех иртерсе йараҫҫӗ. Госстрахӑн инспекцине нимӗн те пӗлтермеҫҫӗ. Ҫавӑн пек йӑнӑшсем текех ан пулччӑр тесен, халех ҫакна тумала: ыраш, тулӑ калчисене, клеверсене пӑхса тухмала та, миҫе гектар тата миҫе процент таран пӑсӑлни ҫинчен Госстрах инспекцине ҫырса памала. Вара районти страховой комиҫҫи пырса пӑхса акт ҫырат, кунпа пӗрлех кирлӗ хушусем парса хӑварат, йе тӳлемелле пулсан, мӗн чухлӗ тӳлемелине кӑтартса парат.

Хаҫхи вӑхӑтра колхозсем ҫакан пек инкек-синкексенчен хӑйсен ирӗкӗпе страхлаттарма пултараҫҫӗ: пӑрла ҫӑмарсен сийенӗсенчен, ӳсекен тырпул вырӑнтах ҫунасран, сивӗпе (тӑм ӳкнипе) тата шыв айне пулакан вырӑнта пӑсӑлса пӗтесрен.

Кун пек йӗркене колхозсен пурлӑхӗсемшӗн ҫеҫ кӑларнӑ, вӑл йӗркепе пур колхозсен те уса курма тӑрӑшмала.

А. Кольцов.

Май уйавӗ умӗн

Халӑх хуҫалӑхӗн пур отраслӗсенче те йут ҫӗршыв разведкисене тара кӗрешнӗ сылтӑмла-троцкисла сӑтӑрҫӑсен сийенӗсене пӗтӗмпех пӗтерер! ССР Союзӗн социалисӑмӑн никам тӗкӗнеймен крепӑҫӗ туса хурар!

(ПСК(б)П Тӗпкомӗ 1938 ҫулхи Майӑн 1-мӗшне ирттерме панӑ лозунгсенчен).

Пӗгайӑвӑ бригади малта

Шупашкарти спирт савӑтӗнче Пӗгайӑвӑ йулташ бригади 1-мӗш квартал планне 150,25 процент тултарнӑ. Анчах апрел уйӑхӗн малтанхи кунӗсенче посуда пулман пирки ӗҫ чылайах чарӑнса тӑчӗ. Ҫав ҫитменлӗхе пӗтерме хыҫҫӑн бригада лайӑх тӗслӗхсем кӑтартса ӗҫлеме пуҫларӗ. Уйӑн — бригади плана кулленех иртерсе тултарат.

Богданӑва тата Васильӗва йулташсем йертсе пыракан бригадӑсем те плана ытлашшипех тултарса пыраҫҫӗ. Хаҫхи вӑхӑтра посуда ҫителекле ҫукки ӗҫлеме чӑрмантарат. Савӑт дирекцийӗн посуда ҫителекле тӑрӑтас пулат.

Ӑмӑрту сарӑлса пырат

ВАРМАР. (Хамӑр корр.). Спорт инвентарӗсем тӑвакан хапрӑкри рабочисем уйава производствӑра ҫитӗнӳсем туни кӗтсе илессишӗн ӑмӑртӑва тухнӑ. Хапрӑк пӗрремӗш квартал планне 112,4 процент тултарнӑ. Халӗ уйрӑм рабочисем, цехсем апрел уйӑхӗнчи плана ытлашшипех тултарассишӗн тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Стоҫарнай цехри стахановецсем Сорокин тата Тихиросин йулташсем уйӑх планне 200-шер процент ытла тултарма обязательствӑ илнӗ.

Хапрӑк дирекцийӗ стахановецсемпе ударниксене премине пама 2 пин тенкӗ укҫа уйӑрнӑ.

Т. М.

Республика майӑн пӗррӗмӗшне хатӗрленет

ТАВАЙ. Авӑспурт Кипекри вӑтам шкулти хӗлхӗле оркестрпа хор кружокӗ май уйавне тӗлне ҫеҫ нумай юрӑсем вӗренме тытӑнчӗҫ. Хор кружокӗ: „Песня о Сталине", „Хӗвелӗмӗр Сталин", „Сывӑх ран та сывӑх Сталин", „Паттӑр ҫар йурри" т. ыт. юрӑсене те вӗренӗ. Кружокра пур 35 ача.

К. Лазарӗв.

ИШЛЕЙ. Ишекри Сталин йачӗпе тӑракан колхоз май уйавне хатӗрленсе ирттерессине йертсе пыма 9 ҫынран комиҫҫи уйӑрчӗ. Колхозниксемпе йединоличниксем хӑйсен кил-ҫуртӗсене тасатаҫҫӗ, кӑмакасене шуратаҫҫӗ, урамсене тасатса йаваҫҫем лартаҫҫӗ. Вӑтам шкулта вӗренекенсем йатарласа ҫӗнӗ йурӑсем вӗренеҫҫӗ. Шкулта, клубра тата колхоз бригадисенче стена хаҫачӗсем кӑлараҫҫӗ, лозунгсем ҫыраҫҫӗ. Майӑн пӗррӗмӗшӗнче Ишекре митинг пулат. Митинга тухма 15 йалӑн, партипе правительства руководителӗсен портречӗсене хатӗрлесе хунӑ. Каҫхине кино пулат тата драмкружок спектакль лартса парат.

А. Наумӑв.

ЙЕТЕРНЕ. Палтайри вӑтам шкулта, вӗренекенсем майӑн пӗррӗмӗшӗнче вечӗр туса пама хатӗрленеҫҫӗ. Шкулта вӗренекенсем стена хаҫачӗ тата журнал кӑлараҫҫӗ. Уйав тӗлне вӗренекенсем ПВХО значокӗн нормисене парса пахалӑхне хапартнине кӗтсе илеҫҫӗ.

П. Захарӑв.

Харькӑв облӑҫӗнчи Лазовски районри Илйич йачӗпе тӑракан колхозра ҫурхи ака ӗҫӗ хӗрӳлӗн пырат.
ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Т.И. Мороз трактӑрис урпа акмали ҫӗре культиватӑрсемпе кӑпкалатат.
Ф. Шахлевич фото-ӳкерчӗкӗнчен (Союзфото).

Стариксем—агитатӑрсем

ВАРНАР. Малти Кӑкшӑмри „Хӗрлӗ кавалерис" колхозра РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнай Совечӗсене суйламали Положенисене вӗренес ӗҫ сарӑлса пырат. Суйлав Положенисене кашни колхозник, колхозница тӗплӗн ӑнланма тӑрӑшат. Агитатӑрсем суйлав Положенисене колхозниксене лайӑх ӑнлантарса парас тата заԓатисене йӗркелӗн иртерсе пырас йенӗпе пӗр-пӗринпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. Ку ӗҫре Васильӗв агитатӑр пуринчен те лайӑх ӗҫлесе пырат, вӑл 4 заԓати туса иртернӗ.

Заԓатисем колхоз клубӗнче пулса иртеҫҫӗ. Йулашки вӑхӑтра клуба, вулав ҫурчӗн пуҫлӑхӗ П. Красԓов йулташ тӑрӑшса ӗҫленипе, лайӑх илемлетсе ҫитернӗ. Клубра вулав кӗтесси пур, ку кӗтесре суйлав Положенисене вӗренме пулӑшакан кӗнекесемпе ытти литературӑсем, хаҫат-журналсем тата партипе правителствӑ йышӑннӑ постановленисем пур. Ҫак кӗтесре колхозниксем вулаҫҫӗ, ҫыраҫҫӗ, ӑнланман ыйтусем тӗл пулсан, ыйтса пӗлеҫҫӗ.

Кашни кунах, каҫалана суланӑсан, колхозниксемпе, колхозницӑсем клуба пухӑнаҫҫӗ. Ҫынсем пухӑнса ҫитсен кружок руководителӗ—агитатӑр Васильӗв йулташ суйлав Положенисене вӗрентме тытӑнат. Кружокра Совет Союзӗнче тунӑ ҫитӗнӳсем ҫинчен, тӗнчери лару-тӑру ҫинчен уйрӑм тӗслӗхсем илсе ӑнлантарса парат.

Суйлавҫӑсен активлӑхӗ ӳсеех пырат. Суйлавҫӑсем—Никифӑрӑв, Михайлӑв, Романӑв йулташсем 60-шар ҫула ҫитнӗ пулсан та, йулашки вӑхӑтра хӑйсем агитатӑрсем пулса тӑчӗҫ. Вӗсем кружоксене вӗренме ҫӳремен ватӑ стариксемпе карчӑксем патне килсе кайса суйлав Положенисене ӑнлантарса параҫҫӗ. 65 ҫулхи колхозник Семен Романӑв заԓати вӑхӑтӗнче суйлавсем ҫинчен тӗплӗн ӑнлантарса парат.

— Ӗлӗк пире, чухӑнсене, суйлав пухӑвӗсене те йамастчӗҫ. Пиреншӗн ун чух суйлав прави пачах пулман. А халӗ епӗр пурте пӗртан правасемпе уса куратпӑр. Ҫакӑн пек правасене пире Совет власӗ анчах пама пултарчӗ,—тет вӑл.

Колхозра агитаци ӗҫне анлӑн сарса йанӑ. Пур ҫӗрте те: коԓухсем патӗнче, фермӑра, арманта уйрӑм агитатӑрсем суйлав Положенисене вӗрентеҫҫӗ.

Ст. Улангай.

9.245 ҫын кружоксенче

Канаш районӗнче РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнай Совечӗсене суйламали Положенисене вӗренмели кружоксем кашни колхозрах организациленӗ. Пайанхи куна кружоксенче 9245 ҫын вӗренеҫҫӗ. Кружоксене ҫӳреме пултарайман ҫынсене йалти агитатӑрсем килӗсене кайса вӗрентеҫҫӗ.

Йаманкассинчи Доронин йачӗпе тӑракан колхозра суйлав Положенисене вӗренме 7 кружок организациленӗ, вӑл кружоксенче пӗтӗмпе 461 ҫын вӗренет. Кружоксенче районри агитатӑрсен курсӗнчен вӗренсе тухнӑ йулташсем йертсе пыраҫҫӗ. Йалти агитатӑрсене пулӑшу пама йалсене хулари агитатӑрсем кайаҫҫӗ.

Ф. Антонӑв.

Хут пӗлекен пулаҫҫӗ

РСФСР тата ЧАССР Верховнай Совечӗсен суйлавӗсене хатӗрленнӗ май, Кайри Трак йаленче (Трак р.) хут пӗлменнисемпе сахал пӗлекенсене—37 ҫынна вӗрентме тытӑннӑ. Вӗсене Игнатйӗв учител вӗрентет. Йалсовечӗ кашни вӗренекен валԓи хут, каранташ, кӗнекесем ҫителӗклӗ илсе панӑ. Заԓатисем йӗркелӗ пулса иртеҫҫӗ.

Б. Иванӑв.

Н. И. Шелепи

Ылттӑн саспаллипе

Союзлӑ республикӑри халӑхсен
Верховнай Совет суйлавӗсем
Килеҫҫӗ хӗвел пек йалтӑртатса,
Ҫуркунне пек капӑр тумланса.

Аслӑран та аслӑ чаплӑ ҫынна,
Хӗвелрен те ҫутӑ Сталина
Пӗтӗм ӗҫхалӑхӗ чунтан савса
Кӑварлӑн саламлат саванса.

Сталин—пирӗн аслӑ вӗрентекен
Ленин ҫулԓпе илсе пыракан,
Пусмӑрта пӑчланнӑ ӗҫ халӑхне
Ҫутӑ кун-ҫул тупса паракан.

Вӑл—ҫын та, хӗвел те, ҫулпуҫӗ те,—
Ҫӑлтӑрсем пек ҫулте ӗҫӗпе;
Мухтавлӑ ҫӗршывӑн ӗҫхалӑхӗ
Ӑна чунтан сават, ырӑ сунат.

Вӑл—ӗҫхалӑхӗшӗн хаклӑ йулташ,
Ватти-ветти ӑна атте, тет,
Йурӑ-савӑпа та, йумахпа та
Ӗҫҫынни Сталина хисеплет.

Ҫӗршывӑн хӗрӗсем Сталин йатне,—
Суйлав кунӗнче ҫӳле ҫӗклеме,—
Хӗрлӗ йалав ҫине чӗнтӗрлеҫҫӗ,
Ылттӑн саспаллипе тӗрлеҫҫӗ.

Суйлакансем Сталин йуратакан
Ӗҫ паттӑрӗсене мухтаҫҫӗ.
Коммунисемпе партире тӑмаԓ
Чи лайӑх ҫынсене суйлаҫҫӗ.

Аслӑран та аслӑ чаплӑ ҫынна
Хӗвел пек хӑваслӑ Сталина,
Пӗтӗм ӗҫхалӑхӗ чунтан савса
Кӑварлӑн саламлат саванса.

Китай халӑхӗн вӑйӗ тӗреклентсех пырат

Йапони империалисӑмӗ Китайа хирӗҫ вӑрҫӑ пуҫласа йани тӑхӑр уйӑх тултарса вуна уйӑх ҫине кайрӗ. Вӑрҫӑ пуҫлас умӗн вӑл: Китайа ҫӗмӗрсе тӑкма нумай-нумай 4—5 дивизи кирлӗ пулӗ, тесе шутланӑ. Анчах пурнӑҫ йапонӗцсен ӗмӗтне пуҫхӗрлӗ ӳпӗнтерсе йачӗ. Вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа Китай халӑхӗ нумайне вӗренчӗ. Вӑл чылай ҫӗрте оборонӑран наступленийе куҫма пуҫларӗ. Ура тупанӗнчен пуҫласа пуҫ тӳпине ҫити хӗҫпӑшалланнӑ Йапони Китай халӑхӗн вӑйне хытах туйса илме пултарчӗ.

Йапони агрессӑрӗсен, малтан шутласа хунӑ пек 4—5 дивизи мар, Китайа хирӗҫ мӗлйунлӑ ҫар мобилизацилемеле пулчӗ. Йапони нимӗнле вӑрҫӑра та хаԓхи пек йӑвӑр килнине курман. Хаԓхи вӑрҫӑ унӑн хуҫалӑхне, малтан та тӗреклӗх пулманскерне, тӗпренех силлет. Вӑрҫӑ 7—8 уйӑх хушшинчех йапонӗцсенне ҫичӗ мӗлйард иенӑ ҫӑтса йама ӗлкӗрчӗ.

Йапонин хуҫа пулса пурнакан класӗсем хӑйсен халӑхне сыпӑкран сыпӑка ҫапла вӗрентсе пынӑ: „пирӗн императӑр ҫарӗ никам ҫӗнтерейми ҫар пулса тӑрат", тенӗ. Ҫав „никам ҫӗнтерейми" ҫара халӗ Китай ҫарӗсем пӗтех те хытӑ туйӑнтараҫҫӗ. Каппайчӑк ҫар вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа 300 пин ытла салтак тата 400 ытла самолҫот ҫухатрӗ. Тӑхӑр уйӑх хушшинче 300 пин ытла!

Йапони захватчикӗсем пӗр харӑс икӗ ҫӗртен—Ҫурҫӗр Китайра тата Шанхай патӗнче — Китайа хирӗҫ вӑрҫӑ пуҫласа йачӗҫ. Малтанхи вӑхӑтра вӗсем чылай тапанса, кӗчӗҫ Ҫурҫӗр Китайра Чахар, Хебей, Суййуаԓ татах Шаԓси провинцийӗсене, Вӑтаҫӗр Китайра Шанхайпа Нанкина тытса илчӗҫ. Анчах асӑннӑ ҫӗнтерӳ—вӑл ҫирӗп ҫӗнтерӳ мар. Акӑ мӗншӗн: Китай столицине—Нанкина туртса илнӗ хыҫҫӑн, Китай чӗркуҫҫи ҫине тӑрӗ, тесе шутланӑ йапонӗцсем. Чӗркуҫленсе тӑрас вырӑнне Китай халӑхӗ хӑйӗн тӑван ҫӗршывне хӳтӗлеме сиксе тӑчӗ, вырӑнӗ-вырӑнӗпе Йапони ҫарӗсене ҫӗмӗрме тытӑнчӗ.

Йапони ҫарӗсен малтанхи ҫитӗнӗвӗсем мӗнрен килнине тӗплӗнрех ӑнланса илес тесен, ҫакна астӑвас пулат: вӑрҫӑ пуҫланнӑ тӗле Китай ҫарӗ сапаланса тӑнӑ. Урӑхла каласан, пӗр пайӗ, пысӑкрах пайӗ, тӗп правителствӑна пӑхӑнса тӑнӑ, тепӗр пайӗ уйрӑм генерал губернатӑрсен аллинче пулнӑ. Ҫапла ӗнтӗ, вӑрҫӑ пуҫланнӑ тӗле Китай ҫарӗ пӗр командӑвани тавра пӗтӗҫсе ҫитмен пулнӑ.

Китай ҫарӗ йыш тӗлӗшӗнчен сахалах мар. Анчах хӗҫпӑшал тӗлӗшӗнчен вӑл Йапони ҫарӗнчен чылай кайарах тӑрат. Ӑна ҫак танлаштару та лайӑх кӑтартса парат:

	Йапони дивизийӗ	Китай див.
Винтовкӑсем	17.000	4.300
Ҫӑмӑл пулеметсем	436	72
Йавӑр пулеметсем	148	24
Грӑнӑтӑ пемеллисем	436	20—30
Танксене пемели орудисем	24	—
Дивизионнай тупӑсем	24	12

Кунта Китайӑн тӗп правителстввине пӑхӑнса тӑракан ҫарсен дивизине илнӗ. Провинцисенчи ҫарсен вӑрҫӑ хатӗрӗсем тата та сахалтарах. Хӑшпӗрисен тата нимӗнле артиллери те ҫук. Малтанхи ҫур ҫул хушшинче Ҫурҫӗр Китайра йапонӗцсене хирӗҫ ҫапах ҫавӑн пек вырӑнти вӑйсӑр ҫарсем ҫапӑҫнӑ. Ҫитменне ҫав провинци ҫарӗсене йертсе пынӑ генералсем хушшинче Йапонине майлӑ етемсем чылай пулнӑ. Ҫӑмахран, Шаԓдун провинцийӗн генерал-губернатӑрӗ Хаԓ Фу-цӳ, Цзинаԓ хулине—асӑннӑ провинцийӗн столицине—нимӗн ҫапӑҫмасӑрах йапонӗцсене панӑ. Тӑшмана сутӑннӑ генералсене Китай правителстви вырӑнтан кӑларчӗ, чылайӗшне, ҫав хисепрех хайхи Хаԓ Фу-цӳ генерала та, персе пӑрахрӗ.

Китай троцкисӗсем Китай халӑхне пысӑк сийен кӳрсе тӑнӑ, халӗ те сийен кӳреҫҫӗ. Вӗсем Йапони разведкипе пӗркаварлӑ пулса ӗҫлеҫҫӗ, Йапони разведки хушнӑ ӗҫсене туса пыраҫҫӗ. Ҫӑмахран, акӑ, троцкиссен ирсӗр ӗҫӗсене кӑтартса паракан нумай тӗслӗхсенчен пӗри: Сингапур утравӗ ҫинче пурнакан китайӗцсем кӑҫалхи йанвар уйӑхӗнче Йапонине хирӗҫ демонстраци туса иртересшӗн пулнӑ. Анчах Китай троцкисӗсем, Китай халӑхӗн ылханлӑ тӑшманӗсем, демонстраци тума паман, аркатса тӑкнӑ. Китай халӑхне нацилӗ пӗрлӗх фронтне пӗтӗҫтерес ӗҫре те троцкиссем нумай сӑтӑр туса пычӗҫ. Китай ҫарӗсем темиҫе ҫул хушши пӗр-пӗринпе ҫапӑҫса темӗн чухлӗ вӑй тӑкрӗҫ. Ҫав айапла ӗҫе Йапони империалисӑмӗпе пӗрле троцкиссем ӗшкӗртсе пычӗҫ.

Анчах Китай халӑхӗ, пур тӗрлӗ йӑвӑрлӑхсене сирсе, Йапони агрессӑрӗсене пуҫӗпех ҫӗмӗрсе тӑкма вӑй пухса пырат. Китайри коммуниссен партийӗ йертсе пынипе нацилӗ пӗрлӗх фрончӗ пуҫланса кайрӗ. Вӑл халӗ сарӑлнӑ ҫемӗн сарӑлса, тӗреклӗннӗ ҫемӗн тӗрекленсе пырат.

Китайри коммунисла парти иртнӗ ҫулсенче калама ҫук пысӑк йӑвӑрлӑхсем тӳссе курчӗ. Анчах нимле йӑварлӑх умӗнче те вӑл хул-ҫурама усса тӑман, 450 мӗлйунлӑ Китай халӑхне пӗтӗҫтерес ӗҫе пӗр самантлӑха та пӑрахман. Вӑл йалана ҫакна асра тытса ӗҫленӗ, ӗҫлет те:—Китай халӑхӗн никам ҫӗнейми хӑватлӑ вӑйӗ хӑйӗн ирӗклӗхне хӳтӗлеме ҫирӗп пӗтӗҫнинче пулат. Ку тӗлӗшпе коммуниссен паттӑр партийӗ чылай пысӑк ҫитӗнӳсем тума пултарчӗ. Ҫав ҫитӗнӳсем хӑйсен малтанхи ҫимӗҫӗсене пама пуҫларӗҫ—Китай ҫарӗсем контратака тума тытӑнчӗҫ.

Март уйӑхӗнче Шаԓдун провинцийӗн кӑнтӑр пайӗнче пит те вӑйлӑ ҫапӑҫу пулнӑ. Йапони ҫарӗсем хӗресле чукунҫул ҫинче ларакан Ҫуйчжоу хулине туртса илесшӗн пулнӑ, кайран вара хӑйсен ҫурҫӗрти фронтне вӑтаҫӗрти фронтпа пӗрлештерме тытӑнасшӑн пулнӑ. Вӗсем икӗ ҫулпа пынӑ: тӗп вӑй—чукунҫул тӑрӑх, тепри—чукунҫултан айаккарахри ҫулпа Ичжоу ҫине тапӑнса пынӑ. Китай командӑванийӗ ӑнӑҫлӑ маневр туса, ҫав икӗ ушкӑна пӗр-пӗринчен уйӑрса йанӑ, унтан вара йапонӗцсен тӗп вӑйне, чукунҫул тӑрӑх пыраканнине, хупӑрласа илнӗ. Апрел пуҫламӗшӗнче Тайерчжуан патӗнче Китай ҫарӗсем Йапонин икӗ дивизине пуҫӗпех ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Ҫавӑн хыҫҫӑн Йапони ҫарӗсем вӑрҫӑ хатӗрӗсене параха-пӑрахах кайала чакма тытӑннӑ. Анчах чакса кайма та ҫӑмӑл мар, мӗншӗн тесен Китай ҫарӗсем йапонӗцсен ҫулне хыҫалтан пӳлсе лартнӑ.

Ҫав пысӑк ҫӗнтерӳ Китай ҫарӗн вӑй-хӑвачӗ, унӑн ҫапӑҫу пултарулӑхӗ ӳссе пыни ҫине кӑтартса парат. Ҫӗнтерӳ хыпарӗ Китай ҫӗршывӗ тӑрӑх хуларан хулана, йалтан йала сарӑлса, Китай халӑхӗн кӗрешӳ хастарлӑхне малала ҫӗклентерсе пырат. Ахаԓтен мар ӗнтӗ Тайерчжуан патӗнче кӗрешсе илнӗ ҫӗнтерӳ хыҫҫӑн, Китай хулисенче пысӑк та хӑватлӑ митингсем пулса иртрӗҫ.

Ку вӑл пуҫласа тунӑ ҫӗнтерӳ те мар, йулашки ҫӗнтерӳ те мар. Китай ҫарӗн паттӑр ҫӗнтерӗвӗсем сахал мар. Ҫӑмахран, иртнӗ ҫул ҫентабӗр уйӑхӗнче Китайӑн 8-мӗш револҫуцилӗ-халӑх ҫарӗ (Хӗрлӗ Ҫар пулни) Пинсингуаԓ патӗнче 10 пин салтакран тӑракан Йапони ҫарне пуҫӗпех ҫӗмӗрсе тӑкрӗ. Ҫав ҫӗнтерӳсем, вӗсем Китай ҫарӗ малашне тата та пысӑкрах, тата та хӑватлӑрах ҫӗнтерӳ тӑвас шанчӑк кӳрсе тӑраҫҫӗ.

Китай ҫарӗн ҫӗр ҫинчи чаҫӗсем кӑна мар, Китай авиацийӗ те хастарланнӑ ҫемӗн хастарлансах пырат. Нойабӗрпе декабӗр уйӑхӗсенче Китай самолҫочӗсем Йаԓцзы йуханшывӗ ҫинчи Йапони карапӗсене бомбӑсемпе персе хӑшне-пӗрне шыва путарчӗҫ. Декабӗрпе йанвар уйӑхӗсенче Китай авиацийӗ Йапонин Нанкинри, Ухари, Гуандери аеродромӗсем ҫине пыра-пыра тапӑнчӗ. Йапонин ҫар базисене персе ӑшаларӗ. Йулашкинчен, февраԓ пӗтес умӗн вӑл сасартӑк Формозӑ утравӗ ҫинчи аеродром ҫине тапӑнса, Йапонин 36 самолҫотне ҫӗмӗрсе тӑкрӗ. Китай самолҫочӗсем чиперех кайала вӗҫсе килнӗ. Анчах вырӑна ҫитнӗ-ҫитменех вӗсен тӑшман самолҫочӗсене хирӗҫ сывлӑша вӗҫсе хӑпармала пулнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫура вӗсем йапонӗцсенне каллех тепӗр 16 самолҫот персе антарнӑ. Китай авиацийӗ ҫав ҫапӑҫура мӗн пурӗ икӗ самолҫот кӑна ҫухатнӑ.

Китай авиацийӗ Формозӑ ҫине кайса тапӑнни уйрӑмах пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрат. Унччен Йапони ҫӗрӗ ҫине Китай самолҫочӗсем пырса тапӑнни пулман. Анчах ҫав пуҫласа тапӑннипех Йапони власӗсем хӑраса ӳкнӗ. Вӗсем, халӑха пӗлтерес мар тесе, хӑйсен хаҫачӗсене ҫавӑн ҫинчен нимӗн те ҫыртарман, Китай самолҫочӗсем Йапони хулисем ҫине пырса тапӑнасран шиклене пуҫланӑ.

Фронтра Китай ҫарӗсен хастарлӑхӗ ӳссе пынипе пӗрлех Йапони тылӗнче Китай партизанӗсен хастарлӑхӗ ӳсет. Партизан отрйачӗсемпе 8-мӗш ҫар чаҫӗсем Йапонине ал-урӑран ҫыхса тӑраҫҫӗ. Ҫавна май Йапонин тылра фронтринчен те ытларах ҫар тытса тӑма тивет.

Партизансен вӑйӗ йумахри пекех ӳссе пырат. Ҫурҫӗр Хебейри партизан ҫарӗн командуйушчийӗ ҫапла каласа парат: пирӗн отрйад иртнӗ ҫулти октабӗр уйӑхӗнче пуҫланса кайрӗ. Ун чухне отрйадра мӗн пурӗ те пилӗк ҫын кӑначчӗ. Хаԓхи вӑхӑтра отрйад 10.000 ҫынна ҫитрӗ. Отрйадра пуринчен ытла хресченсем тӑраҫҫӗ. Рабочисем те чылай. Рабочисем отрйада цемӗнт пек хытарса тӑракан вӑй пулаҫҫӗ. Отрйадри ҫынсене пурне те хӗҫпӑшал туйантарнӑ. Хӗҫпӑшалне ҫапӑҫусенче йапонӗцсенчен туртса илнӗ.

Партизан отрйачӗсем шутсӑр хӑйулӑн ҫапӑҫаҫҫӗ. Ҫӑмахран, Шаԓдун провинцийӗнче ҫакӑн пек ӗҫ пулса иртнӗ. Хуанхе йатлӑ йуханшыв хӗрринче ларакан Путай хулинче Йапони гарнизонӗ тӑнӑ. Гарнизонра 300 салтак пулнӑ. Партизан отрйачӗ тапӑнасса сиссе, йапунсем хула хапхисене хупса лартнӑ, пӗр хапхине ҫеҫ уҫӑ хӑварнӑ, унта та пулин вӑйлӑ хурал тӑратнӑ. Партизансем вара чейелӗхпе илнӗ. Вӗсем 40 ҫынна туй пек тумлантарнӑ. Хӗрпе каччӑ ларас урапа ҫине пулемет лартнӑ. Барабан ҫапса, оркестр каласа, алла чӗчексем тытса, хула хапхи патне пырса тӑнӑ. Хӗр пӑхма пынӑ Йапони часовойне ҫавӑнтах шаккаса пӑрахнӑ. Унтан отрйад хулана утӑкайса кӗнӗ те, Йапони гарнизонне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.

Ҫапла ӗнтӗ, Китай халӑхӗн вӑйӗ пӗтеҫнӗ ҫемӗн пӗтеҫсе, тӗрекленнӗ ҫемӗн тӗрекленсе пырат. Ҫав хушӑрах вӑрӑма тӑсӑлнӑ вӑрҫӑ Йапони империалисӑмӗн вӑйне тӗппӗрен хавшатат. Йапони салтакӗсен куҫне-пуҫне уҫат. Йапони ҫарӗнчи салтак виллисем ҫумӗнче час-часах „империалисӑм вӑрҫинчен граждӑн вӑрҫи туса йарар" тесе чӗнекен листовкӑсем тупаҫҫӗ.

Китай халӑхне ҫӗнтерӳ, паллах, ҫӑмӑл пулас ҫук. Анчах вӑл пуҫӗпех ҫӗнтерес пирки нимӗн иккӗленмели те ҫук. Хӑйӗн ирӗклӗхӗшӗн кӗрешме вӑраннӑ паттӑр халӑх ҫӗнтерме вӗренсе пырат. Коммунисла парти йертсе пынипе нацилӗ пӗрлӗх фронтне пӗрлешнӗ 450 мӗлйунлӑ халӑх вӑл калама ҫук пысӑк вӑй. Унӑн Йапони империалисӑмне океана ывӑтса йама вӑй ҫитет.

П. Иванов.

ССР Сойузĕн оборонине тĕреклетмели займ облигацисене алла параççĕ

Сойузри мĕн пур республикăсенче, крайсемпе облăçсенче те ССР Сойузĕн оборонине тĕреклетмели займ облигацисене алла пама пуçланă. Халĕхи вăхăтра вĕсене колхозниксемпе йединоличниксем илеççĕ, апрел уйăхĕн вĕçĕнче перекет кассисем рабочисемпе тата служăщисемпе расчот тума тытăнаççĕ.

Горький облăçĕнче 1.316 колхозра облигацисене пĕтĕмпех—3.600 пин тенкĕлĕх алла панă. Грузин ССР Республикинче колхозниксене облигацисем 5 мĕлйун тенкĕлĕх алла панă, Днепропетровск облăçĕнче 21 мĕлйун тенкĕлĕх. (ТАСС).

Çурхи тырăсене 20.619 пин гектар акнă

ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн, ССР Сойузĕн Совхозсен Халăх Комиссариачĕн тата ССР Сойузĕн Апат-çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕн сведĕнийĕсем тăрăх, апрелĕн 20-мĕш тĕлне Сойузĕпе çурхи тырăсене 20.619 пин гектар акнă. Вăл шутран колхозсем 18.811 пин гектар, Совхозсен Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем—1.295 пин гектар, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем—214 пин гектар тата Апат-Çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем—299 пин гектар акнă. (ТАСС).

Слесăр Короłов йулташăн чаплă рекорчĕ

ГОРЬКИЙ. Апрелĕн 21-мĕшĕнче Молăтăв йачĕпе тăракан автосавăтри штампсем тăвакан цехри слесăр комсомолĕц Короłов йулташ пуансонсем (штамп пайĕ) тунă çĕрте нормăна 2.800 процент тултарнă. Автосавăтри тăхăр пин ытла стахановĕц йаланах икшер-виçшер нормă тултарса пыраççĕ. (ТАСС).

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăçри (Арагонири) фронтра Треми районĕнче республиканĕçсем пăлхавçăсен хăшпĕр позицийĕсене туртса илнĕ. Марокканĕçсен кавалерийĕ наступлени тума хăтланнă, анчах республиканĕçсем вĕсене кайала хăваласа йанă.

Тортоса Итали интервенчĕсемшĕн малтанхи пекех никам çĕнтереймин хула пулса йулат. Эбро йуханшывĕнчен кăнтăр йенче Саłсадеņйа йатлă йал çывăхĕнчи (Сан Матеоран кăнтăрала) çулĕ выранĕсенче пысăк çапăçусем пулса пыраççĕ.

Ытти фронтсенче — улшăнусем çук.

* *

Апрелĕн 21-мĕшĕнче фашиссен самоłочĕсем Пуигсерда (Каталонири, Франципе йунашар чикĕри хула) хули çине пырса тапăннă. Вĕсем 100 бомбăна йахăн пăрахнă. Вилнисем 20 çын шутланаççĕ, аманнисем—40 çын. Республикăн зенитлă батарейĕ фашиссен виçĕ моторлă пĕр самоłотне персе антарнă. (ТАСС).

Йут çĕршывсенче майăн 1-мĕшне хатĕрленни

ŅЙУ-ЙОРК. Америкăри рабочисен организацийĕсем майăн 1-мĕшĕнче вăрçа тата фашисăма хирĕç, пĕрлешӳлĕ демонстраци тума хыттăн хатĕрленеççĕ. Çав ĕçе Ņйу-Йорк профсойузĕсемпе ытти массăллă организацисем 700 пин çын хутшăнаççĕ.

ХАŅКОУ. Хаņкоупа Учанре Майăн 1-мĕшне организацилес тата ăна иртерес ĕçе йертсе пыма комитетсем тунă. Комитетсене портсенчи рабочисен, морйаксен сойузĕн, Бейпин—Хаņкоу чукун çул рабочийĕсен, пир-авăр ĕçĕнче ĕçлекенсен тата ыт. представителĕсем те кĕреççĕ.

ЛОНДОН. Англири профсойузсем Май уйавĕсенче пулма Мускава 40 çынран делегаци йараççĕ.

Делегацине ССР Сойузĕпе килĕштерсе туслăн пурăнас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет уйарнă. Май уйавĕсем хыççăн, делегаци ССР Сойузĕ тăрăх тухса кайат. (ТАСС).

Кĕскен

■■ Дайренре (Китайри квантун облăçĕ, ăна Йапони çарĕсем йышăнса илнĕ) йапонĕçсем 2.000 китаĕца арестленĕ, вĕсене Йапонине хирĕç кĕрешнĕ çĕрте пулнă тесе айăпланă.

■■ Чехословаки правительстви Итали Абиссинине туртса илнине официаллă йышăннă.

■■ Йапони çарĕн Китайри вăрçă ĕçĕсем çителĕксĕр çаралса пынă пирки Йапонин çар министрĕ Сугийама вуна кун хушши Китайри фронтсем тăрăх вăрттăн çÿрене. (ТАСС).

Пăрлă поход çинчен выставкă

ЛЕНИНГРАД. Апрел уйăхĕн варринче, хĕрлĕ морйаксем граждан вăрçи вăхăтĕнче Гельсинки (Финлянди) хулинчен Кронштадта пирĕн вăрçă карапĕсене пăр витĕр илсе килни 20 çул тултарчĕ. Ку похода „пăрлă поход" тесе йат панă. Унчухне пăр витĕр карапсене илсе килмен пулсан, пирĕн карапсене йут государствă буржуазийĕ туртса илнĕ пулĕччĕ.

Анчах та революцийĕ хĕрлĕ матроссем пирĕн карапсене хамăр Совет шывĕ çине илсе килнĕ. Çак походăн геройла ĕçĕсене кăтартакан материалсенчен Ленинградри Тинĕс-çар музейĕ уйрăм выставкă тунă.

Куракансем питĕ нумай.

А. Михайлăв.

А. Студенецкий—Чăваш республикĕн шахмăт чемпионĕ

Чăваш республикĕн шахмăт турнирĕнчи йулашки турта пулса иртнĕ партисен пысăк улшăнусем памарĕç. Воскресенский 2-мĕш вырăна, Шелегăв—3-мĕш вырăна тухма тивĕçлĕ шулли унчченех палларĕ.

Анчах Студенецкипе Воскресенский хушшинчи кĕрешӳ кулма, сывсем чылай пухăнчĕç. Вăйă вăрăма тăсăлчĕ тупи те, интереслă иртрĕ теме сук. Вăйă никам çĕнтерĕмĕнне пĕтрĕ, икĕшĕ те суршар очко илчĕç:

Çапла вара А. Студенецкий кăçалхи 3-мĕш хут Чăваш республикин шахмăт чемпионĕ йатне йышăнчĕ.

Кăçалхи турнира вăл пĕр парти выляламасăр 10 очкоран 9 очко пухрĕ, иккĕмĕш вырăна тухнă Воскресенский 8 очко илчĕ, виççĕмĕш вырăнта Шелегăв, унăн 7 очко.

Выçаканисенчен ытти çакăн пек йĕркелене тăчĕç: Гарбузăвпа Говш—5,5-шар очко, Завуланăв—5, И. Григорйĕв—4,5, Лукишовпа В. Григорйĕв—4-шер тата Остоумăвпа Алексейĕвă—пĕрер очко йышăнчĕç.

М. Ижейĕв.

Уйав умĕнхи суту-илӳ

Шупашкарти суту-илӳ организацийĕсем май уйавĕ умĕнхи тата уйав кунĕсенчи суту-илӳве хатĕрленеççĕ. Чебторгăн 1-мĕшпе 3-мĕш №-лĕ апат-çимĕç магазинĕсемпе 5-мĕш №-лĕ çăкăр-булкăсем сутакан магазине уйав кунĕсенче учреждениесемпе килĕсене тĕрлĕрен çимĕçсем леçсе пама заказсем илмалла пуçланă. Вĕсем тĕрлĕрен суртла çăнăхсем, конфетсем, варенисем, фруктăсем, повидлăсем, булка, плушка, пирожнай, торт т. ыт. те леçсе пама заказсем илеççĕ.

Хале Чебторг магазинĕсенче уйав кунĕсенче ачасене пама конфет, премĕк, печени т. ыт. пылак йапаласем хурса уйрăм пакетсем туса хатĕрлеççĕ.

** Чăвашторг май уйавĕн кунĕсенче сутма тĕрлĕрен таварсем нумай илсе килет. Сахăр—540 пин тенкĕлĕх, конфет, премĕк, печенисем—300 пин тенкĕлĕх, ĕне çăвĕ—100 пин тенкĕлĕх, типĕ çу—182 пин тенкĕлĕх, маргарин—63 пин тенкĕлĕх, сыр—15 пин тенкĕлĕх, тĕрлĕрен пулăсем—120 пин тенкĕлĕх, консервăсем—35 пин тенкĕлĕх, кăлбасăсем—100 пин тенкĕлĕх, çăмарта—50 пин тенкĕлĕх, макарона вермишел—70 пин тенкĕлĕх.

Çитес кунсенчех, тата калушсем—35 пин тенкĕлĕх, çăлĕнĕ кĕпесем—80 пин тенкĕлĕх, пусмасем тавар—100 пин тенкĕлĕх, трикотаж: чăлхасемпе носкисем т. ыт. те—60 пин тенкĕлĕх кӳрсе килесçĕ.

Совет Сойузĕн хулисем тăрăх

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Ленинградри Мускав районĕн совечĕн çĕнĕ çурчĕ.

Н. Йанов фото-ӳкерчĕкĕнчен (Сойузфото).

Учитĕлсен болшевисăма вĕренмеле

Шкулти вĕренӳпе воспитани ĕçне партипе правитĕлствă хушнă пек çӳле çĕклеме пире паха пĕлӳлĕ, болшевисăмпа çирĕп хĕçпăшалланнă учитĕлсем кирлĕ. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ, учитĕлĕн педагогикăлă квалификацийĕпе политикăлла пĕлӳлĕхне хăпартассишĕн çине тăрса ĕçлемели çинчен Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе уйăн вырăнти органĕсене çак вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕн питех те çирĕппĕн кăтартса хăварчĕ. Иртнĕ кĕркунне районсем учитĕлсене валłи парти историне, ССР Сойузĕнчи халăхсен историне, ленинисăма, историлĕ материалисăма вĕренмели курссем тата кружоксем организацилерĕç.

Пĕтĕм республикипе çакнашкал курссемпе кружоксенче (мĕн пурĕ вĕсем 349 пулнă), 6.789 учитĕл вĕренме тытăннă. Курссемпе кружоксене йертсе пыма лайăх вĕрентсе хатĕрленĕ пропагандиссене çирĕплетнĕ, вĕренме уйăхра виçĕ кун палăртнă. Сăмахран, Елĕк районĕнче 16 курс, 3 кружок, Нăрачкав районĕнче—14 политшкул организацилернĕ.

Болшевисăма вĕренес ĕç 1937—1938 вĕренӳ çулĕнче учитĕлсен практикăлă ĕçне таччăн çыхăнса пычĕ. ССРС Верховнăй Советне суйламали кампанире учитĕлсем халăха Сталинла Конституципе суйлав саккунĕсене ăнлантарса парас ĕçе активлăн хутшăнчĕç. Учитĕлсенчен 3.392 çын агитатăрсем пулса, 1.325 çын участкăри суйлав комиççисен членĕсем пулса ĕçлерĕç.

Пирĕн республикăри чи лайăх учитĕлсенчен пĕрине—Олгă Тихăнăвнă Харитонăвă йулташа чăваш халăхĕ ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйларĕ. Республикăри учитĕлсемшĕн ку—пысăк чыс, пысăк хисеп.

Анчах хăшпĕр çĕрте парти райкомĕсем, районри çутĕç пайĕсем учитĕлсене политикăла воспитачи парас ĕçĕн ответлăхне çителĕклĕ туйса илеймен, вĕсем учитĕлсен политикăла курсĕсемпе кружокĕсене начар йертсе пыраççĕ. Çавна пула, чылай кружоксем йухăна пуçланă. Сăмахран, Шăхасан районĕнче, Чуракасси шкулĕ çумĕнчи кружокăн пĕр занłати те пулман. Кружок ĕçне йертсе пыма кунта районри çутĕç пайĕн пуçлăхне Кириллăв йулташа уйăрса çирĕплетнĕ. Паллах, пуçлăх çакнашкал „пример" кăтартни ахалł йулмасť. Районра ытти кружоксен те хĕл касиччен 2—3 занłатирен ытла пулман.

Час-часах кружоксен занłатийĕсем районри çутĕç пайĕсен айăпĕпе пулмасăр йулаççĕ. Мĕншĕн тесен, кружок занłати пулас кун çутĕç пайĕ кружок руководитĕлĕсемпе шкул директăрĕсене района чĕнсе илет. Çавăн пек, Сĕрпӳ районĕнчи çутĕç пайĕн пуçлăхĕ Краснов й-ш февралĕн 20-мĕшĕнче мĕн пур шкул директăрĕсемпе заведуйущийĕсене района пухнă та, çав кун вĕсене политкружок занłатийĕнчен татнă. Ахалł те Сĕрпӳ районĕнче ПСК(б)П историне вĕренмели кружоксем йанвар уйăхĕнче тин ĕçлеме пуçланă. Çавнашкал тĕслĕхех Кувакинă районĕнче те курма пулат. Кунти учитĕлсен курсĕсенче парти историйĕ тăрăх виççĕмĕш темă тĕлне кăна çитнĕ.

Çулсерен çапла, нумайĕш кружоксем парти историйĕпе 1905 çулхи револłуци патне çитеççĕ те чарăнаççĕ, унтан тепĕр çул татах çĕнĕрен пуçлаççĕ. Кунашкал йĕркене пĕтермеле. Учитĕлсен политикăла курсĕсемпе кружокĕсем йĕркелĕн, районри çутĕç пайĕсем палăртнă кунсенче ĕçлесе пымала. Партин тата профсойузăн районри организацийĕсем политкружок руководитĕлĕсене методикă йенпе куллен пулăшса тăмала, вĕсемпе тăтăшах семинарсем туса иртермеле. Районри учитĕлсен Шупашкарти учитĕлсенчен пример илмеле, кунта учитĕлсен пĕтĕмпе 6 курс ĕçлет (исмат, диамат, ленинисăм, парти историйĕпе ССРС халăхĕсен историне вĕренмели курссем). Мĕн пур курссенче 18—20-шер занłати туса ирттернĕ. Кăçалхи вĕренӳ çулĕ валłи палăртнă план куллен пурнăçа кĕрсе пырат.

Учитĕлсен политикăла вĕренĕвĕ — шкул директăрĕн, районри çутĕç пайĕн, Çутĕç Халăх Комиссариачĕн куллен шухăшра тăракан ĕçĕ пулмала, мĕншĕн тесен, çамрăк ăрăва коммунисла воспитани парса çитĕнтерес задачăна болшевисăм теорийĕпе çирĕп хĕçпăшалланнă, паха ăсталăхлă, пĕлӳлĕ учитĕлсем татса параççĕ.

П. Терентйĕв.

ТӲРЛЕТНИ

„Чăваш Коммунĕ" хаçатăн апрелĕн 20-мĕшĕнче тухнă 90(4903)-ш номĕрĕнче пичетленнĕ Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн X-мĕш Çессийĕ „Чăваш АССР халăх хуçалăхĕн 1938 çулхи планĕ" çинчен йышăннă постановленире „Капиталнăй ĕçсен планĕн" сур пайĕ тата „Промышлĕннăç тăрăх" пай сиксе йулнă. Вăл пайсене çапла вулямала:

Капиталнăй ĕçсен планĕ тăрăх

Пĕтĕм халăх хуçалăхĕн капиталнăй ĕçсен 1938 çулхи планĕн хисепне, йал-хуçалăх кредичĕсене шута илмесĕр, тĕп лимит тăрăх 73.049,7 пин тенкĕ пулмала тăвас, çав шутран:

Сойуз промышлĕннăçĕ тăрăх	35448,0	пин тенкĕ
Республикă промышлĕннăçĕ тăрăх	4932,0	„ „
Транспăрт тăрăх, халăх хутшăнса ĕçленипе пĕрле	16711,7	„ „
МТС-сен строитĕлстви тăрăх	1822,0	„ „
Сыхăну ĕçĕсем тăрăх	734,5	„ „
Суту-илӳ ĕçĕсем тăрăх	873,0	„ „
Коммуналлă хуçалăх тăрăх	3330,6	„ „
Çуртйĕр хуçалăхĕ тăрăх (ĕçтăвкомсен)	1005,0	„ „
Администрацилĕ строитĕлствă тăрăх	915,0	„ „
Халăха вĕрентессин тăрăх	4999,6	„ „

Çав хисепрен:

Хуласенчи шкул строитĕлстви тăрăх	1342,0	„ „
Йалсенчи шкул строитĕлстви тăрăх	2700,0	„ „
Сывлăха сыхлав ĕçĕсем тăрăх	1452,0	„ „
Вĕсемсĕр пуçне лимитсăр укçа-тенкĕ расхутлани	7996,7	„ „

1938 ç. 28,5 мĕлйун штук кирпĕч туса кăлармала тăвас, вăл шутран халăх комиссариачĕсен промышлĕннăçĕ тăрăх — 14,5 мĕлйун, район — райĕçтăвкомсен промышлĕннăçĕ тăрăх—6 мĕлйун тата промысла коопераци тăрăх — 8 мĕлйун кирпĕч туса кăлармала тăвас.

Вырăнти промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ тата коопераци туса кăларнă кирпĕч тĕпрен илсен лимитпа тума палăртнă строитĕлствăсене кайассине шута илсе, райĕçтăвкомсене вырăнти строитĕлствăсем валłи кирпĕч тăвассине колхозсенче, промысла артелĕсенче тата районти промышлĕннăç предприйатисенче хыттăн вăйлатма хушас.

Промышлĕннăç тăрăх

1. Государствă промышлĕннăçĕн пĕтĕм продукци хисепĕ 1926—27-мĕш çулсенчи хакпа 65271,5 пин тенкĕ пулмала тăвас, вăл шутран: Йăвăр промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕн—4060,0 пин тенкĕлĕх, Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн — 12273,6 пин тенкĕлĕх, ССРС Çăмăл промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕн — 4157,3 пин тенкĕлĕх, Вăрман промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕн—19570,6 пин тенкĕлĕх, ССРС Апат-çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕн — 6176,5 пин тенкĕлĕх, Чăваш АССР Вырăнти промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕн — 6115,5 пин тенкĕлĕх, Чăваш АССР Апат-çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕн—4395,2 пин тенкĕлĕх, районсене пăхăнакан промышленнăçăн—1810,0 пин тенкĕлĕх продукци туса кăлармала.

2. Коопераци промышлĕннăç йенĕпе пĕтĕм продукци хисепĕ 1932 çулхи хакпа 59829,7 пин тенкĕ пулмала çирĕплетес, вăл шутран: Промсойузăн — 29376,7 пин тенкĕлĕх, Вăрманпромсойузăн—17566,0 пин тенкĕлĕх, Кулłпромсойузăн—10287,0 пин тенкĕлĕх, Коопинсойузăн—2600,0 пин тенкĕлĕх продукци туса кăлармала.

3. Ĕç тухăçлăхне 1937 çулхинчен çакăн чухлĕ ӳстермеле тăвас: Чăваш АССР Вырăнти промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх (спортинвентарсем тата сĕтел-пукансем тăвакан хапрăксăр пуçне)—19,1 процент; Чăваш АССР Апат-çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх—39,6 процент; Промсойуз тăрăх—14,2 проц. Вăрманпромсойуз тăрăх—11,1 процент; Кулłпромсойуз тăрăх—10,4 процент тата Коопинсойуз тăрăх—17,4 процент ӳстермеле.

4. Продукци туса кăларма ларакан хака йӳнетес йенĕпе 1937 çулхи вăтам виçепе танлаштарсан çакăн пек заданисем тăвас: Чăваш АССР Вырăнти промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх хапрăк-савăт хакĕпе кирпĕчсен хакне —6,7 процент, фосфорит хакне — 3,0 процент, полиграф ĕçĕсен хакне—7,5 процент, Вăрмарти спорт инвентарĕсем тата сĕтел-пукансем тăвакан хапрăк кăларакан продукци хакне—3,1 процент, Чăваш АССР Апат-çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх, йалсем тырă авăртнине шута илмесĕр (комерчески хака)—2,9 процент йӳнетмеле.

Районсене пăхăнакан предприйатисем 1937 çулта пĕтех те йапăх ĕçленине шута илсе, райĕçтăвкомсене районри предприйатисен ĕçĕсене йаланах тĕрĕслесе пыма, вĕсене валłи кадрсем пухас, чĕрĕ таварсем, материалсем тăратасси тата туса кăларнă продукцисене çарасси йенĕпе йалан пулăшса пыма хушас.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ халăх комиссариачĕсене, хуçалăх организаци руководитĕлĕсене тата предприйати директăрĕсене продукци пахалăхне лайăхлатма тата плана сортиментсем тăрăх, чи паха продукци туса кăларса пурнăçа кĕртмеле тума хушат.

1938 ç. халăх комиссариачĕсен тата предприйатисен ĕçĕсене продукци кăларас плана тултарни тăрăх çеç мар, продукци хакне йӳнетес заданисене пурнăçлани, продукци пахалăхĕ тăрăх та хакламала пулат.

Пулни-иртнисем

Çак кунсенче Ишлей районĕнчи Мăн Катăк йалĕнче пушар тухнипе колхозăн авăн çапмали сарайĕ, молотилкă тата вейăлкă çунса кайнă. Вут—Алексейĕв колхозник, бригадир Шчербаков хушнă тăрăх, сарайне кавар сӳнмен кĕл тăкнинчен тухнă. Çакăн пек йĕркесĕр хăтланнăшăн айăплисене—Шчербаковпа Алексейĕва ответ тыттараççĕ.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Чăваш АСС Республикĕнчи пур рабочисене, служăщисене тата ĕççыннисене

Хăвăр предприйатинчи комсодсем урлă пурнăçа коллективлăн страхлассине организацилĕр.

Коллективлă страхланă тăрăх кашни квартăла 3 тенкĕ тӳлесе тăрсан, сарăмсăр инкек пулсан страховкă укçи 1000 тенкĕ параççĕ.

Коллектив килĕшнĕ тăрăх 500, 1000, 2000, 3000, 4000 тата 5000 тенкĕлĕх те страхланма пулат. Кунашкал страхланнă чух коллективлăн страхланакансен пурин те пĕр пек суммăлăх страхланма килĕшсе çырса памала тата пĕтĕм коллективри ĕçлекенсенчен 40 проценчĕнчен кайа мар чухлĕ малтанхи тӳлеве хывмала.

Çав коллективри ытти ĕççыннисем, вĕсем миçе çынне пăхмасăр, хăйсен коллективĕпе пĕр пек суммăлăх страхланма килĕшменнисем, çав коллективрах хăйсен пурнăçне хăйсем килĕшнĕ сумăлăх страхлама пултараççĕ.

Страховкă укçине пухма чи лайăх производствĕннисене уйăрăр. Страховкă укçине вăхăтра тӳлесе пырăр.

АСТАВАР:

Кашнийĕх страховкă укçине срукра тӳлемесен, страхланисен шутĕнчен тухнă шутланат. Страховкă укçине тулеĕ чух укçа пухакансенчен страховой удостоверени çине паллă тутарăр.

Харпăрхăй пурнăçне коллективлăн страхлама пултарайманнисем (килхуçи хĕрарăмсем тата ытти ĕççыннисем), çавнашкалах рабочисемпе служăщисем те коллективлăн страхланма килĕшмеççĕ пулсан, хăйсем килĕшнĕ суммăлăх уйрăмăн çакăн пек йĕркесемпе страхланма пултараççĕ:

А) **Сарăмсăр инкек пулнă пирки вилсен йе инвалида йулсан страховой укçа илме 500 тенкĕрен 10.000 тенкĕлĕх таран страхланма пулат;**

Б) **Кирек мĕнле сăлтавран та вилсен страховой укçи илме.**

Кирек мĕн чухлĕ суммăллăх та страхланма йурат, анчах страховкă тулевне страхланакан çын миçе çултине кура кашни 1000 тенкĕлĕх страхланнăшăн çулталăкa 15 тенкĕрен 39 тенкĕ таран тулемеле пулат.

В) **Вилнĕ хыççăн йе ватăлса вилнĕ хыççăн страховой укçи илме страхланмали йĕркесем пирки Госстрах органĕсенче ăнлантарса параççĕ.**

Страхованин пур ыйтăвĕсемпе те районсенчи йе хуласенчи страховой инспекцисенче тата ЧАССР Госстрах Тытăмĕнче тĕплĕн ăнлантарса параççĕ.

Чăваш АССР Госстрах Тытăмĕн адрĕсĕ: Шупашкар, Карл Маркс урамĕ, 12. Телефонсем: № 1—90 тата 2—76.

Чăваш АССР Госстрах Тытăмĕ.

Академи театрĕнче

Апрелĕн 26-мĕшĕнче

Вырăсла спектаклĕ

ПРЕМЙЕРА!

Л. Н. ТОЛСТОЙ

АННА КАРЕНИНА

(5 пайлă)

Аслă режиççор

Г. В. СТРАНСКИЙ

лартат.

Художник

Йе. Н. САПОЖНИКĂВ.

Талон № 177.

Абонемент № 2, талон № 17.

Шупашкарти Кооптехникум

пур граждăнсенчен те тĕрлĕрен кĕнекесем сутăн илет: вырăсла, клаçикăла литература, йутçĕршыв чĕлхипе пичетленнисене, йутçĕршыв чĕлхисенчен вырăсла куçарнисене тата ытти художĕствăлă кăларнисене.

Кĕнекесене техникумăн библиотекине пырса пама йурат йе граждăнсем пĕлтерсен кĕнекесене сутăн илме техникум хăйĕн представитĕлне киле йарат.

2—2 Диренци.

Шупашкарти Кооптехникум

3-мĕш №-лĕ Радиозаводра 1938 çулта тунă трансłацилĕ-вăйлатмали радиоузĕл аппаратне сутат. Вăйĕ 25 киловатт, 40 радиоточкăлă. Переменнăй токпа тата постойаннăй токпа ĕçлет. Патефон тата микрофон лартса усă курмали хатĕрсем те пур. Аппарат йусавлă унпа пĕр уйăха йахăн çеç усă курнă.

Хакĕ 3.559 тенкĕ.

ДИРЕКЦИ.

2—2.

Тĕп аероклуб вĕренме илет

Чăваш республикĕнчи Лłапидевски йачĕпе тăракан Тĕп аероклуб вĕренме илет.

Занłатисем производствăран уйăрăлмасăр, ирхине тата каçхине пулаççĕ,

ВĔРЕНМЕ КĔРЕС ТЕКЕНСЕН:

1. Çирĕп те лайăх сывлăхлă пулмала;
2. 16 çул тултарнисенчен пуçласа 22 çулхисем таранисене илеççĕ;
3. Пилот уйрăмне вĕренме кĕме 7 çуллă шкул программи чухлĕ, авиомотористсен уйрăмне 6 группă программи чухлĕ вĕреннисене илеççĕ.

Вĕренме кĕрес текенсен аероклуба çакăн пек документсем тăратмала:

1. Зайавлени;
2. Тĕплĕн çырнă автобиографи;
3. Вĕренни çинчен справкă;
4. Совет, парти тата обшчĕствăлă организацисенчен илнĕ характеристикă.

Аероклуба вĕренме илекен комиççи çак кунсенче аероклубра ĕçлет: апрелĕн 26-мĕшĕнче, апрелĕн 28-мĕшĕнче, майăн 4-мĕшĕнче, майăн 8-мĕшĕнче тата майăн 14-мĕшĕнче ирхине 10 сехетрен пуçласа 14 сехетчен.

Районсенчен килнисене валłи аероклубăн хватер çук.

Аероклуб.

Уполномоченный Чувашглавлита № 212

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста.

Алçырăвсене кайала памаççĕ.